ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Январь 30 ЮНКУН

№ 22 (8674)

Хакĕ 20 пус.

34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

СССР халăх хуçалăхне малалла аталантармалли государство планне 1951 çулта тултарни çинчен. СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕ пĕлтерни (1—2 стр.).

Маршал Чойбалсан (2 стр.).

Монголи халăхĕ йывăр çухату пирки хурланать (2 стр.).

П. Семенов. — Колхозсен ăмăртăвĕ (3 стр.).

В. Таврин. — Финанс планне иртгерсе тултарар (3 стр.).

Ял Совечĕн ĕçĕ—активпа тачă çыхăнса ĕçленинче. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Паникасси ял Совет исполком председателĕ Е. Семенова юлташ каласа пани (3 стр.).

Василий Алендей. — Хастарлă хĕрсем (3 стр.).

ООН Генеральнăй ассамблейин улттăмĕш сессийĕ (4 стр.).

Греци сучĕ вĕлермелле тунă Греци патриочĕсен тăванĕсем И. В. Сталин юлташ патне янă çыру (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Социализмлă экономикăпа культурăн хăватлă çĕкленĕвĕ

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли 1951 çулхи государство планне тултарни çинчен СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕн паян пичетленекен пĕлтерĕвĕ совет халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе тунă çав тери пысăк çитĕнӳсене уççăн кăтартса парать.

Çак пĕлтерӳрен акă мĕн курăнать: иртнĕ çулта социализмлă экономикăн пĕтĕм отраслĕсем малалла пысăк утăм тунă, пуринчен малтан пирĕн промышленность продукци туса кăларассине нумай ӳстернĕ. **1951 çулта валовăй продукци туса кăлармалли плана промышленность пĕтĕмпе 103,5 процент тултарнă. ССР Союзĕн пĕтĕм промышленноçĕн валовăй продукцийĕ 1950 çулхипе танлаштарсан 1951 çулта 16 процент ӳснĕ.** Чугун çул транспорчĕ грузсем турттармалли çулталăкри плана иртгерсе тултарнă.

Промышленность продукцийĕн пахалăхĕ малалла лайăхланни тата ассортименчĕ нумайланни совет промышленноçĕн иртнĕ çулхи паллă уйрăмлăхĕ пулса тăрать. Кунпа пĕрлех оборудованипе усă курасси лайăхланнă, кашни уйрăм продукци туса кăларма чĕртавар, материал, топливо тата электроэнерги сахалтарах расходланă. **Промышленность продукцийĕн хăйне ларакан хакне йӳнетме çирĕплетнĕ плана иртгерсе тултарнă.**

Пирĕн çĕршыв халăх хуçалăхĕ малта пыракан техникăпа вĕçĕмсĕр пуянланать. Йывăр тата пысăк ĕçсене механизацилесси, производствăна автоматизацилесси анлă пулса пырать. Иртнĕ çулта çĕнĕ машинăсемпе, механизмсемпе тата материалсемпе ĕçлеме хăнăхас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тунă. Тăван çĕршыв машиностроителĕсем пилĕкçĕре яхăн çĕнĕ йышши машинăсемпе механизмсем тунă, вĕсем халăх хуçалăхĕн техникăллă прогресне малалла вăйлатаççĕ. Рабочисен тата инженерсемпе техниксен çичçĕр пине яхăн изобретенийĕсемпе сĕнĕвĕсене пурнăçлани производство процесĕсене тĕпрен çĕнетсе лайăхлатма пулăшнă.

Çĕрĕçпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла аталантарас, колхозсене организаципе хуçалăх енчен çирĕплетес тĕлĕшпе социализмлă ялхуçалăхĕ çĕнĕ çитĕнӳсем турĕ. СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи тырпул тухăçлăхне палăртас тĕлĕшпе ĕçлекен Государствăн Главнăй Инспекци кăтартса панă тăрăх, 1951 çулта **çичĕ миллиард та тăватçĕр миллион пăт тĕштырă туса илнĕ.**

1951 çулта колхозсемпе совхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ ӳснĕ. Колхозсемпе совхозсем ĕрчетекен выльăх-чĕрлĕх пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхĕн пысăк пайĕ пулса тăчĕ. Пур хуçалăхсем енĕпе илсен, пĕтĕм выльăх-чĕрлĕх хисепĕ вунтăватă миллиона яхăн ӳснĕ.

Ялхуçалăхĕн техникăллă никĕсĕ ӳссе çирĕпленет. Иртнĕ çулта ялхуçалăхĕ, 15 лаша вăйлĕ трактор çине куçарса шутласан, 137 пин трактор, 53 пин тырпул пухса кĕртекен, вăл шутран: 29.000 самоходнăй комбайн, 59 пин грузовой автомобиль, ытти ялхуçалăх машинисем 2 миллион илчĕ. Ялхуçалăхне механизацилеÑнипе пĕр вăхăтра, ăна электрификацилес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă. Сутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла аслă план пурнăçа кĕрсе пырать.

Пирĕн çĕршывра капитальнăй строительство çав тери вăйлăн аталанса пырать. Иртнĕ çулта строительство енĕпе пысăк ĕçсем тунă: 1950 çулхипе танлаштарсан государствăн капитальнăй ĕçĕсем валли панă укса хисепĕ 112 процент чухлĕ пулнă. 1951 çулта Атăл, Дон тата Днепр çинче гидротехнически пысăк сооруженисем, çавăн пекех Туркменири тĕп канала тăвас тĕлĕшпе çирĕплетнĕ плана ăнăçлă тултарнă.

Халăх хуçалăхĕ хăватлă çĕкленсе пынă никĕс çинче пирĕн çĕршыври ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланать, культури ӳсет. Иртнĕ çулта совет суту-илĕвĕ малалла вăйланса пычĕ. Совет правительстви 1951 çулхи мартăн 1-мĕшĕнче, карточнăй системăна пĕтерни хыççăн, ваккăн сутакан таварсен хакне тăваттăмĕш хут йӳнетрĕ. Çакă совет тенкине малалла çирĕплетрĕ, унпа таварсем ытларах илме тата халăха таварсем нумайрах сутма май туса пачĕ.

Халăх хуçалăхĕнче рабочисен тата служащисен хисепĕ малалла ӳссе пырать. 1951 çул вĕçленнĕ тĕле вĕсен хисепĕ 40.8 миллион çынна çитнĕ. 1951 çулта, ун умĕнхи çулсенчи пекех, çĕршывра ĕçсĕрлĕх пулман. Промышленноçăн пур отраслĕсенче те пысăк квалификациллĕ кадрсем—рабочисем куллен нумайланаççĕ.

1951 çул социализмлă культура пур енĕпе те çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе паллă пулса тăрать ССР Союзĕнче вĕренекенсен пĕтĕм хисепĕ иртнĕ çулта 57 миллион çынна çитнĕ. Аслă тата вăтам шкулсем çĕршер пин çамрăк специалистсем вĕрентсе кăларнă.

Партипе правительство ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшни пурăнмалли çуртсем тăвас ĕç сарăлса пынинче лайăх курăнать. Иртнĕ çулта кăна государство, хуласемпе рабочи поселокĕсенчи ĕççыннисем, государство кивçен укçа парса пулăшнипе, 27 миллион тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çуртсем тунă. Унсăр пуçне ялсенче 400 пине яхăн çĕнĕ çуртсем туса лартнă.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланнине наци тупăшĕ куллен ӳссе пыни уççăн та анлăн кăтартса парать. Вăл 1951 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, 12 процент ӳснĕ. Совет Союзĕнче наци тупăшĕ пĕтĕмпех ĕççыннисен аллинче. ССР Союзĕнчи ĕççыннисем, иртнĕ çулхинчи пекех, наци тупăшĕн тăватă пайĕнчен виçĕ пайне хăйсен материальнăй тата культурăллă нушисене тивĕçтерме илнĕ, наци тупăшĕн ытти пайĕ социализмлă производствăна анлăлатма тата государствăпа обществăллă пушасене тивĕçтерме государство, колхозсемпе коопераци организацийĕсен аллине юлнă. Куллен кирлĕ таварсен хакне чакарнă, рабочисемпе служащисен ĕç укçи ӳснĕ, хресченсен укçан тата натурăпа илекен тупăшĕ пысăкланнă, халăха государство шучĕпе льгота укçисем тӳлени ӳснĕ май— **рабочисемпе служащисен тата хресченсен тупăшĕ 1951 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, 10 процент ӳснĕ.**

Совет экономикипе культурин чаплă çитĕнĕвĕсем—малта пыракан социализмлă стройăн аслă результачĕсем, вĕсем социализмлă строй капитализмлă стройран нумай малта тăнине кăтартса параççĕ. Çав çитĕнӳсене Совет государствин сталинла мирлĕ политикине çирĕп пурнăçласа пынă никĕс çинче тунă. Ленин—Сталин партийĕ хавхалантарса пынипе совет халăхĕ юратнă Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн хăйĕн вăй-хăватне хĕрхенсе тăмасть, вăл коммунизм строительствин аслă программине çав тери пысăк çĕкленӳпе пурнăçласа пырать.

Тăван çĕршывăн вăй-хăватне ӳстерсе тĕреклетессишĕн куллен тăрăшса, пирĕн халăх ĕçре хăйĕн активлăхĕпе пусарулăхне вĕçĕ-хĕррисĕр ӳстерсе пырать, хуçалăхпа культура строительствинчи ĕçсене хăвăртлатать. Совет çыннисем, пĕр шухăш-кăмăллă пулса, государство планĕсене тăтăшах тултарас тата иртгерсе тултарас тесе ĕçлеççĕ, çавна май вĕсем производствăн шалти резервисемпе лайăхрах тата пĕтĕмпех усă курма тăрăшаççĕ.

Центральнăй Статистика Управленийĕн пĕлтерĕвĕнчен çакă курăнать: пирĕн промышленноçăн хăшпĕр отраслĕсем государство планĕсене тултарман. Иртнĕ çулта вăрман промышленноçĕ, çĕр мамăк тата çул-йĕр министерствисен предприятийĕсем плана тултарман.

Çакна та манма юрамасть: промышленноçăн чылай отраслĕсем, продукци туса кăлармалли плана тултараççĕ тата иртгерсе тултараççĕ пулин те, питĕ кирлĕ изделисем туса кăларма панă заданисене пурнăçламаççĕ. Иртнĕ çулта, сăмахран, хура металлурги, йывăр машиностроени, машинăсемпе приборсем, ялхуçалăх машинисем тăвакан, строительство материалĕсен промышленноçĕн министерствисем питĕ кирлĕ продукци тумалли плана пĕтĕмпех тултараймаи.

Çавнашкал çитменлĕхсене пĕтерни кирлĕ. Çапла тумалла: кашни предприяти плана çирĕплетнĕ номенклатура тата ассортимент енĕпе тултарса пытăр, кунпа пĕрлех продукци пахалăхне пĕрмай ӳстертĕр тата продукцин хăйне ларакан хакне йӳнеттĕр. Çавăн пек тăвас тесен, пуринчен малтан, предприятисенчи хăватлă техникăпа туллин усă курмалла, кашни предприятире пур ĕçе те пысăк пахалăхпа туса пырассишĕн социализмлă ăмăртăва тата та ытларах вăйлатмалла.

Парти организацийĕсен массăсен социализмлă ăмăртăвне пуçарса пымалла, промышленность предприятийĕсенче, колхозсенче, МТС-сенче тата совхозсенче массăллă-политикăллă ĕçе лайăхлатмалла, ĕççыннисене ĕç çине тата обществăллă харпăрлăх çине коммунистла пăхма воспитани памалла, çитменлĕхсене палăртма критикăпа самокритикăна вăйлатмалла, çавна май хуçалăхпа культура строительствин пур участокĕсене те малалла аталантарса пымалла.

Социализмлă экономикăпа культурăн Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе тунă çав тери паллă çитĕнĕвĕсем совет халăхне пирĕн Тăван çĕршывăн вăй-хăватне малалла тĕреклетсе пырассишĕн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешме хавхалантараççĕ.

(«ПРАВДА» хаçатăн январĕн 29-мĕшĕнчи умстатьи).

СССР халăх хуçалăхне малалла аталантармалли государство планне 1951 çулта тултарни çинчен

СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕ пĕлтерни

1951 çулта промышленность, ялхуçалăхĕ тата транспорт аталанса пынине, капитальнăй строительство мĕн чухлĕ пулнине, тавар çаврăнăшĕ вăйланнине, халăх пурнăçĕ лайăхланнине тата унăн культурин ӳсĕмне çак цифрăсем кăтартса параççĕ:

I. Промышленность енĕпе производство планне тултарни

Пĕтĕм промышленность 1951 çулта **продукци** туса кăлармалли çулталăкри плана пĕтĕмĕшпе 103,5 процент тултарнă.

Уйрăм министерствăсем промышленность продукцийĕ кăлармалли çулталăкри плана çакăн чухлĕ тултарнă:

	1951 çулхи плана тултарнă (процентпа)
Хура металлурги министерстви	104
Тĕслĕ металлурги министерстви	102
Çĕр кăмрăк промышленность министерстви	100,7
Нефть промышленность министерстви	103
Электростанцисен министерстви	102
Хими промышленность министерстви	104
Электропромышленность министерстви	103
Çыхăну хатĕрĕсем тăвакан промышленность министерстви	102
Йывăр машинăсем тăвакан промышленность министерстви	100
Автомобильпе трактор промышленность министерстви	100,6
Станоксем тăвакан промышленность министерстви	100
Машинăсемпе приборсем тăвакан промышленность министерстви	100,9
Строительствăпа çул-йĕр машинисем тăвакан промышленность министерстви	106
Транспорт машинисем тăвакан промышленность министерстви	100,9
Ялхуçалăх машинисем тăвакан промышленность министерстви	104
СССР Строительство материалĕсен промышленность министерстви	102
СССР Вăрман промышленность министерстви	94
Хут тата йывăç япаласем тăвакан промышленность министерстви	103
СССР Çăмăл промышленность министерстви	102
СССР Пулă промышленность министерстви	109
СССР Аш какайпа сĕт-çу промышленность министерстви	103
СССР Апат-çимĕç промышленность министерстви	107
СССР Çĕр мамăк министерствин промышленность предприятийĕсем	99,7
Çул-йĕр министерствин промышленность предприятийĕсем	99,1
СССР Сывлăх министерствин промышленность предприятийĕсем	106
СССР Кинематографя министерствин промышленность предприятийĕсем	103
Союзлă республикăсенчи вырăнти промышленность министерствисемпе вырăнти топливо промышленность министерствисем	106
Промысла кооперацийĕ	106

1951 çулта производство планне çак продукцисем енĕпе нумай иртгерсе тултарнă: хăшпĕр йышши хура металсем енĕпе, хăшпĕр йышши тĕслĕ металсем енĕпе, тимĕр трубасем, çĕр кăмрăкĕ, нефть, çутçанталăк газĕ, бензин, лигроин, дизель топливи, торф, электроэнерги, электромоторсем, электровакуум приборĕсем, металл касмалли станоксем, арламалли машинăсем, пир тĕртмелли станоксем, тикĕслекен машинăсем, тракторсем, тĕштырă комбайнĕсем, йĕтĕн комбайнĕсем, сложнăй молотилкăсем, йĕтĕн пухакан машинăсем, йывăç касмалли машинăсем, грузовиксемпе çăмăл автомобильсем, автобуссем, магистральнăй паровуссем, тепловозсем, экскаваторсем, грейдерсем, бульдозерсем, моторлă катоксем, автомобиль кранĕсем, автопогрузчиксем, шарикоподшипниксем, синтетически каучук, автопокрышкăсем, синтетически аммиак, каустически сода, сернăй кислота, минераллă удобренисем, ялхуçалăх культурисене спен кӳрекен хурт-кăпшанкăсене тата çумкурăкĕсене пĕтермелли наркăмăшлă химикатсем, сăрăсем тата ытти йышши химикатсем, çурт çине витмелли çемçе материалсем, шифер, кĕленче, хут, спирт тата промышленноçăн ытти йышши продукцисем енĕпе.

Çулталăкри планран иртгерсе промышленность тата апат-çимĕç таварĕсем туса хатĕрлеме Правительство çĕнĕрен хушса панă задание иртгерсе тултарнă. 1951 çулта планран иртгерсе çĕр мамăк пирăвăрĕ, çăм тата пурçăн пир-аврĕсем, кĕпе-тумтирсем, чăлха-носкисем, резина атă-пушмак, çĕвĕ машинисем, сехетсем, фотоаппаратсем, колбаса тавраш[illegible], çăратнă сĕт, сыр, ӳсен-тăран çăвĕ, сахăр, кондитерски изделисем, консервсем, макарон, чей, виноград эрехĕ, шампански эрех, сăра, супăнь, папирос, спичка тата халăха кирлĕ ытти таварсем нумай туса кăларнă.

Продукци туса кăлармалли çулталăкри плана пĕтĕмĕшпе тата промышленноçăн питĕ кирлĕ йышши продукцийĕсем енĕпе планăн пысăк пайне тултарнă тата иртгерсе тултарнă пулин те, хăшпĕр министерствăсем уйрăм йышши продукцисем тĕлĕшпе плана тултарман. Çавăнпа пĕрлех уйрăм предприятисем продукци туса кăлармалли плана иккĕмĕш вырăнта тăракан япаласене туса хатĕрленĕ шутпа иртгерсе тултарнă, çав вăхăтрах государство планĕнче палăртнă япаласене туса кăларас тĕлĕшпе плана тултарман.

1951 çулта промышленность продукцийĕн пахалăхне малалла лайăхлатса тата ассортиментне йышлăлатса пынă. Анчах та уйрăм ассортиментсемпе пахалăх тĕлĕшĕнчен государствăн планлă заданийĕсене промышленноçăн чылай отраслисем тултарман. Çапла, сăмахран, Хура металлурги министерстви хура металл прокачĕн уйрăм йышши продукцийĕсем енĕпе плана тултарса çитермен, Йывăр машинăсем тăвакан промышленность министерстви пăс хуранĕсемпе пăс турбинисем туса кăлармалли плана тултарман, Машинăсемпе приборсем тăвакан промышленность министерстви—хими оборудованийĕ, компрессорсем тата счетнăй машинăсем енĕпе уйрăм йышши машинăсем туса кăлармалли плана, Ялхуçалăх машинисем тăвакан промышленность министерстви—трактор сеялкисем, триерсем, сортировкăсем тата ытти хăшпĕр ялхуçалăх машинисем туса кăлармалли плана. СССР Строительство материалĕсен промышленность министерстви — хăшпĕр йышши цементсем туса кăлармалли плана, СССР Вăрман промышленность министерстви ĕçе юрăхлă йывăçсем турттарса кăлармалли плана тултарман.

II. Промышленность продукцийĕ туса кăларасси ӳсни

1951 çулта кирлĕрех промышленность продукцисем туса кăларасси, 1950 çулхипе танлаштарсан, çакăн пек ӳснĕ:

	1951 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, çакăн чухлĕ туса кăларнă (процентпа)
Чугун	[illegible]
Хурçă	115
Прокат	115
Тимĕр трубасем	114
Пăхăр	114
Тăхлан	125
Цинк	115
Çĕр кăмрăкĕ	108
Нефть	112
Çĕр айĕнчи газ	108
Бензин	120
Краççын	103
Дизель топливи	145
Электричество энергийĕ	114
Пăс турбинисем	110
Пысăк гидротурбинăсем	245
Турбогенераторсем	211
Гидрогенераторсем	193
Пысăк электричество машинисем	137
Электричество моторĕсем	124
Электричество лампиcем	120
Пысăк, йывăр тата пур ĕçсене те тума май паракан станоксем	111
Хими оборудованийĕ	138
Ялхуçалăх машинисем	115
Трактор сеялкисем	115
Трактор культиваторĕсем	117
Тĕштырă комбайнĕсем	115
Магистральнăй электровозсем	111
Автобуссем	134
Мотоциклсем	102
Экскаваторсем	105
Счетнăй машинăсем	201
Шарикоподшипниксем	130
Кальцинированнăй сода	109
Каустически сода	108
Сăрăсем	115
Минераллă удобренисем	107
Ялхуçалăх культурисене сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсене тата çумкурăксене пĕтермелли наркăмăшлă химикатсем	185
Синтетически каучук	120
Цемент	119
Кирпĕч	120
Çурт çине витмелли çемçе материалсем	113
Шифер	127
Стандартнăй çуртсем	116
Ĕçе юрăхлă йывăç турттарчă	117
Хут	112
Велосипедсем	178
Çĕвĕ машинисем	133
Сехетсем	127
Фотоаппаратсем	137
Радиоприемниксем	116
Патефонсем	124
Пианинăсемпе рояльсем	121
Çĕр мамăкĕпе сӳс	133
Çĕр мамăк пир-аврĕ	122
Йĕтĕн пир-авăр	111
Çăм пир-авăр	113
Пурçăн пир авăр	134
Чăлха-носкисем	126
Сăран атă-пушмак	117
Резина атă-пушмак	111
Пулă	122
Аш-какай	112
Колбаса	117
Выльăх-чĕрлĕх çăвĕ	106
Сĕт-çу продукчĕсем	144
Çăратнă сĕт	144
Сыр	120
Ӳсен-тăран çăвĕ	112
Кондитерски изделисем	116
Сахăр	118
Спирт	111
Виноград эрехĕ	124
Шампански эрех	121
Сăра	116
Консервсем	118
Спичкăсем	106
Папирос	113
Чей	131

СССР Союзĕн пĕтĕм промышленноçĕн продукцийĕ 1951 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, 16 процент ӳснĕ.

Иртнĕ çулталăкра СССР халăх хуçалăхĕ, государствăн снабжени планĕпе килĕшӳллĕн, чĕртавар, материалсем, топливо, электричество энергийĕ тата оборудовани 1950 çулхинчен чылай нумайрах илнĕ.

1951 çулта промышленноçра оборудованипе усă курасси малалла лайăхланса пынă. Хура металлургире домна кăмакисен усăллă вырăнĕпе усă курасси иртнĕ çулталăкра, 1950 çулхипе танлаштарсан, 5 процент ытларах лайăхланнă. Мартен кăмакисен тĕпĕсен кашни тăваткал метрĕнче хурçă шăратса кăларасси 5 процента яхăн ӳснĕ. Нефть промышленность министерствин предприятийĕсенче çĕре пăраласа шăтарас ĕçе хăвăртрах туса пыма тытăннă. Таса нефть продукчĕсем туса кăларасси ӳснĕ. Çĕр кăмрăк промышленность министерствин предприятийĕсенче иртнĕ çулталăкра çĕр кăмрăк комбайнĕсен ĕç тухăçлăхĕ 19 процент ӳснĕ.

Хими промышленность министерствин предприятийĕсенче синтетически каучукпа синтетически аммиак хатĕрленĕ çĕрте оборудованипе туллин усă курас ĕç лайăхланнă. Çĕр мамăкĕнчен çип арлакан промышленноçра тата цемент промышленноçĕнче оборудованипе усă курасси лайăхланнă.

1951 çулта пĕр япала туса кăларма тухакан чĕртавар, материал, топливо тата электричество энергийĕ расходласси, 1950 çулхипе танлаштарсан, чакнă, промышленноçăн нумай отраслĕсенче çак тăкаксем планпа палăртнă нормăсенчен те пĕчĕкрех пулнă. Промышленность продукцийĕн хăйне ларакан хакне 1951 çулта йӳнетмелли плана иртгерсе тултарнă. Промышленность продукцийĕн хăйне ларакан хакне 1951 çулта йӳнетнинчен перекетленĕ укçа хисепĕ 26 миллиард тенкĕ ытла пулнă, ку шута чĕртаварсемпе материалсен курттăмăн сутмалли хакĕсене йӳнетнипе перекетленнĕ укçа-тенкĕ кĕмест. 1951 çулта промышленноçа аталантарас, ĕç тухăçлăхне ӳстерес тата продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетес тĕлĕшпе çитĕнӳсем тунипе правительство 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен металсен, машинăсемпе оборудованин, топливăн, химикатсен, строительство материалĕсен тата хутăн курттăмăн сутмалли хакĕсене çĕнĕрен йӳнетнĕ, çавăн пекех электричествăпа пăс энергийĕшĕн тата грузсем турттарнăшăн тӳлемелли тарифсене йӳнетнĕ.

III. Халăх хуçалăх ĕçне çĕнĕ техника кĕртсе пыни

1951 çулта çĕнĕ йышши машинăсемпе, механизмсемпе, материалсемпе ĕçлеме хăнăхас тĕлĕшпе малалла çитĕнӳсем тунă.

Совет машиностроенийĕ 1951 çулта çĕнĕ йышши тата çĕнĕ маркăллă паха машинăсемпе механизмсем 500 яхăн тунă. Вĕсем халăх хуçалăхĕнче техника енĕпе малалла прогресс тума май параççĕ.

Çĕнĕ йышши хăватлă пăспа ĕçлекен турбинăсем, пысăк пусăмлă хурансем, гидротурбинăсемпе гидрогенераторсем, электроэнергине инçете панă çĕрте усă курмалли воздушнăй выключательсем, разъединительсем, пысăк напряжениллĕ разрядниксем тунă.

Пысăк гидротехнически сооруженисем тунă çĕрти йывăр ĕçсене механизацилеме хăватлă землесоснăй снарядсем, землечерпалкăсем, утакан пĕр куркаллă тата нумай куркаллă пысăк тухăçлă экскаваторсем, автоматпа ĕçлекен бетон заводĕсем валли хăватлă бетономешалкăсем тата 25 тоннăллă грузовой автомобильсем туса кăларнă.

Станоксем тăвакан промышленноçра 150 яхăн çĕнĕ йышши тимĕр касакан пысăк тухăçлă станоксем, кузнечно-прессовăй машинăсем тата чылай çĕнĕ йышши твердосплавнăй инструментсем ĕçе кĕртнĕ.

Ялхуçалăхĕнчи уй-хир ĕçĕсене малалла механизацилеме çĕрĕçĕ тумалли, акмалли, лартмалли, тĕштырăсем тата техникăллă культурăсемпе пахча çимĕçсем пухса кĕртмелли тата вĕсене хатĕрлемелли çĕнĕ йышши машинăсемпе орудисем туса хатĕрленĕ Кунсăр пуçне выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе механизацилеме тата йывăçсем лартма çĕнĕ йышши машинăсем туса хатĕрленĕ.

Халăх хуçалăхĕн мĕнпур облаçĕсенче механизаци шайĕ чылай ӳснĕ

Çĕр кăмрăк промышленноçĕнче 1950 çултах çĕр кăмрăк касмалли, катса илмелли, турттармалли ĕçсене тата çĕр айĕнчи транспорт ĕçсене механизацилесе çитернĕ. 1951 çулта сӳхе тата чăнкă сийсенче çĕнĕ йышши комбайнсем ĕçлеме пуçланă. Вĕсем çĕр кăмрăк кăларас ĕçе механизацилессине малалла лайăхлатма май параççĕ. 1.500 ытла комбайнсемпе врубовăй машинăсем тата 1.350 конвейернăй линисем инçетри управлени тăрăх ĕçлеççĕ.

СССР Вăрман промышленность министерствин предприятийĕсенче механизациллĕ ĕçсен пысăкăшĕ, 1950 çулхипе танлаштарсан, вăрман хатĕрлес тата турттарса кăларас енĕпе 1,7 хут, йывăçсем тиес тĕлĕшпе 2,2 хут, турттарса кăларас тĕлĕшпе 1,2 хут ӳснĕ.

Халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсенче 1951 çулта çĕнĕ, пысăк тухăçлă технологи процесĕсене ĕçе кĕртесси малалла пынă. производствăна малалла механизацилес енĕпе пысăк ĕçсем туса иртгернĕ.

Хура металлурги министерствин предприятийĕсенче туса кăларакан пĕтĕм хурçăран 87 процентне мартен кăмакисенче шăратаççĕ. Вĕсене ăшăпа ĕçлекен автоматически регулировкăсемпе хĕçпăшаллантарнă. Прокат туса кăларассине ӳстернĕ. Çакă вăл тимĕре малалла ĕçлесе йĕркелес тĕлĕшпе чылай тимĕр перекетлеме май парать.

Тĕслĕ металлургире çĕнĕ меслетсемпе усă курма пуçланă, рудасене, концентратсене, шламсене пуянлатассине тата комплекслă майсемпе кăларассине технологи енĕпе чылай лайăхлатнă. Çаксем вĕсем тĕслĕ тата сайра хутра тĕл пулакан металсене пĕтĕмпех рударан уйăрса илме май параççĕ.

Нефть промышленноçĕнче турбинăллă меслетпе çĕре шăтарас ĕçре усă курасси чылай пысăкланнă. Тăпра сийĕсем пусса тăнине пĕтермелли меслетсемпе нефть кăларас ĕç малалла аталаннă. Çакă вăл сийсенчен нефте пĕтĕмпех кăларса илме май парать.

Юлашни 2-мĕш страницăра

СССР Халăх хуçалăхне малалла аталантармалли государство планне 1951 çулта тултарни çинчен

СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕ пĕлтерни

Юлашши. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.

Нефть продукчĕсене отечественнăй оборудованипе ĕçлесе кăларас тĕлĕшпе çĕнĕ техникăллă процессемпе малалла усă курса пынă. Çакă вăл нефть продукчĕсем кăларассине ӳстерме тата вĕсен пахалăхне хăпартма май парать.

Машиностроенире тимĕр ĕçлемелли малта пыракан меслетсене малалла ĕçе кĕртсе пынă—хăвăрт меслетпе касасси, тимĕре электричествăпа тата термически майсемпе ĕçлемелли çĕнĕ меслетсем. Массăллă детальсен пысăкăшне тĕрĕслесе тăмалла автоматсемпе çурмаавтоматсем ĕçе кĕртнĕ.

Гидроэлектростанцисене комплекслă майпа автоматизацилес тата электростанцисен хуран агрегачĕсене ăшă процесна автоматизацилес ĕçсем туса ирттернĕ. Районнăй гидроэлектростанцисенчен 90 процент ытла агрегатсем автомат управленийĕпе ĕçлеççĕ.

1951 çулта производство ĕçĕсене лайăхлатас тата тĕпрен улăштарас тĕлĕшпе малта пыракан рабочисен тата инженерсемпе техниксен 700 пин изобретенийĕсемпе рационализаторла сĕнĕвĕсене ĕçе кĕртнĕ.

IV. Ялхуçалăхĕ

1951 çулта социализмлă ялхуçалăхĕ çĕрĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре, çавăн пекех колхозсене организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетес тĕлĕшпе çĕнĕ ситĕнӳсем тунă.

СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи тырпул тухăçлăхне палăртас тĕлĕшпе ĕçлекен Главнăй государственнăй инспекци пĕлтернĕ тăрăх, пĕрчĕллĕ тырпулсен валовой тухăçĕ Атăл тăрăхĕнче, Хĕвеланăç Çĕпĕрте, Казахстанра тата ытти хăшпĕр районсенче, çанталăк начар тăнă пулсан та, 1951 çулта 7 миллиард та 400 миллион пăт пулнă. Çав вăхăтрах апат-çимĕç культурисен—тулăпа ыраш—тухăçлăхĕ 1950 çулхинчен пысăкрах пулнă. Çĕр мамăк тухăçлăхĕ 1950 çулхинчен иртнĕ, иртнĕ çулхисенчен чылай пысăкрах пулнă. Сахăр кăшманĕн тухăçлăхĕ 1950 çулхинчен ытларах пулнă, 27 миллион тоннăран иртнĕ.

1951 çулта мĕнпур культурăсем акнă çĕр лаптăкĕ, 1950 çулхипе танлаштарсан, 6,7 миллион гектар ытларах пулнă. Уйрăмах хлопчатник, сахăр кăшманĕ, хĕвелçаврăнăш тата ытти техникăллă культурăсем акса тăвасси ӳснĕ. Нумай çул ӳсекен тата пĕр çул ӳсекен курăксем, тымарçимĕç, силос культурисем акасси чылай ӳснĕ.

Колхозсемпе совхозсем кĕрхи культурăсем акмалли плана ăнăçлă тултарчĕç. 1952 çулта çуртри акма, 1950 çулхи кĕркунне кĕрхи çĕртме туниччен 5.4 миллион гектар ытла кĕрхи çĕртме тунă.

1951 çулта ялхуçалăхĕн техникăллă никĕсĕ тата ытларах тĕрекленчĕ.

Иртнĕ çул ялхуçалăхĕ, 15 вăйлă тракторсем çине куçарсан, 137 пин трактор, тырпул пухса кĕртмелли комбайнсем 53 пин, вĕсенчен: самоходнăй комбайнсем 29 пин, грузовой автомобильсем 59 пин, çавăн пекех çĕр ĕçлемелли орудисем, акмалли, пухса кĕртмелли тата ытти ялхуçалăх машинисем 2 миллион илнĕ.

Ялхуçалăхĕ техникăпа пуянланса пыни колхозсемпе совхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсене тата ытларах механизацилеме май пачĕ. Машина-трактор станцийĕсем 1951 çулта колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсем 1950 çулхинчен 19 процент ытларах тунă. Иртнĕ çул машина-трактор станцисем колхозсенче пĕтĕм уй-хир ĕçĕсенчен виçĕ пайран икĕ пайне ытларах тунă. Колхозсенче мĕнпур суха ĕçĕсене тенĕ пекех тата акассине тăватă пайран виçĕ пайне механизациленĕ. Колхозсенче тĕштырă акнă пĕтĕм лаптăкран 60 процент ытла комбайнсемпе пухса кĕртнĕ. Совхозсенче тĕп ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмпе тенĕ пекех механизацилесе çитернĕ.

Ялхуçалăхне механизацилениипе пĕр вăхăтрах ăна электрификацилес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. 1951 çулта авăн çапас, выльăх апачĕ хатĕрлес, шыв тăратас, ĕне сăвас, çăм илес ĕçсенче электроэнергипе усă курасси чылай ӳснĕ.

1951 çулта колхозсемпе совхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç малалла ӳссе пынă. Колхозсемпе совхозсем тытакан выльăхсен йышĕ пĕтĕм выльăхсен йышĕнче ытларахăш пайĕ пулса тăрать.

1951 çулта колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕ çакăн чухлĕ ӳснĕ: мăйракаллă шултăра выльăх—12 процент, вăл шутран: ĕнесем—15 процент, сыснасен йышĕ—26 процент, сурăхсемпе качакасем—8 процент, лашасем—8 процент. Колхозсенче кайăк-кĕшĕк йышĕ 1,5 хут ӳснĕ.

СССР Совхозсен министерствин совхозĕсенче иртнĕ çулта мăйракаллă шултра выльăхсен йышĕ 15 процент ӳснĕ. Вăл шутран ĕнесем—14 процент, сыснасем—21 процент, сурăхсемпе качакасем—11 процент, лашасем—14 процент, Совхозсенче кайăк-кĕшĕк йышĕ 27 процент ӳснĕ.

Мĕнпур выльăхсен йышĕ хуçалăхсен пĕтĕм категорийĕсем тăрăх, — совхозсен колхозсен, колхозниксен, рабочисемпе служащисен—1951 çулта 14 миллион пуçа яхăн ӳснĕ. Вăл шутран мăйракаллă шултра выльăхсен йышĕ пĕр миллион та 600 пин ытла, сыснасем 2 миллион та 600 пин, сурăхсемпе качакасем 8 миллион та 500 пин, лашасем пĕр миллион пуçа яхăн. Кайăк-кĕшĕк йышĕ çулталăк хушшинче 60 миллион пуç ытла ӳснĕ.

Колхозсем, вăрман хуçалăхĕсем, машина-трактор тата вăрман станцийĕсем, çавăн пекех Совет Союзĕн Европа пайĕнчи çеçенхирлĕ тата вăрман-çеçенхирлĕ районĕсенчи совхозсем 1951 çулта 745 пин гектар çине йывăç лартнă.

V. Чугун çул, шывçулĕ тата автомобиль транспорчĕ тăрăх грузсем турттарасси ӳсни

Чугун çул транспорчĕ 1951 çулта грузсем турттармалли çулталăк планне ирттерсе тултарнă. 1950 çулхипе танлаштарсан, груз çаврăнăшĕ 12 процент ӳснĕ. Талăкра грузсем тиемелли пĕтĕмĕшле плана чугун çулĕ 103 процент тултарнă.

Вагонсен çаврăнăшне хăвăртлатмалли государство планне иртнĕ çулта ирттерсе тултарнă. Чугун çул çинче кашни тонна-километр пуçне топливо расходласси 1950 çулхипе танлаштарсан 3 процент чакнă. Анчах та чугун çул çинче эксплуатаци ĕçне лайăхлатмалли задание пĕтĕмпех тултарайман.

Шывçул транспорчĕ тăрăх грузсем турттармалли çулталăк планне 1951 çулта 100.6 процент тултарнă. 1950 çулхипе танлаштарсан шывçул транспорчĕ тăрăх грузсем турттарасси 13 процент ӳснĕ.

Тинĕс транспорчĕ тăрăх грузсем турттармалли плана 1951 çулта 102 процент тултарнă. Тинĕс транспорчĕ тăрăх грузсем турттарасси. 1950 çулхипе танлаштарсан. 8 процент ӳснĕ.

Автомобиль транспорчĕпе грузсем турттарасси, 1950 çулхипе танлаштарсан, 20 процент ӳснĕ.

VI. Халăх хуçалăхне капитальнăй ĕçсем валли укçа-тенкĕ хывни

1951 çулта строительство программине пурнăçлас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. 1950 çулхипе танлаштарсан, иртнĕ çулта капитальнăй ĕçсен пысăкăшĕ 112 процент пулнă. Электростанцисем тума государство капитальнăй ĕçсем валли хывнă укçа-тенкĕ пысăкăшĕ 1950 çулхипе танлаштарсан 140 процент, хура тата тĕслĕ металлургире 120 процент, çĕр кăмрăкĕпе нефть промышленноçĕнче 112 процент, машиностроенире 110 процент, строительство материалĕсем тăвакан промышленноçра 135 процент, машина-трактор станцийĕсемпе совхозсем енĕпе 106 процент, транспортра 103 процент, çурт-йĕр строительствинче 120 процент пулнă.

Атăл. Дон, Днепр çинче пысăк гидротехнически сооруженисем тумалли, çавăн пекех Туркменири тĕп канала тумалли планлă заданисене ăнăçлă тултарнă.

Строительство организацийĕсем 1951 çулта пысăк тухăçлă машинăсемпе механизмсем нумай илнĕ. 1950 çулхипе танлаштарсан элеваторсен шучĕ 40 процента яхăн. скреперсем 30 процент ытла, бульдозерсем 80 процент ытла ӳснĕ. Çавăн пекех тата ытти строительнăй машинăсемпе механизмсен шучĕ те нумай ӳснĕ. Стройкăсенче строительство ĕçĕсене комплекслă механизацилле тăвасси анлăрах сарăлса пырать. Строительство материалĕсем тăратасси лайăхланнă.

1951 çулта строительство организацийĕсем 1950 çулхипе танлаштарсан, строительство ĕçĕсен хакне чылай йӳнетнĕ, строительство срокĕсене чакарнă. Анчах нумай организацисем государство строительство ĕçĕсен хакне йӳнетес тĕлĕшпе панă планлă заданисене пĕтĕмĕшпех тултарса çитереймен.

Государство предприятийĕсем, учрежденисем, вырăнти Советсем, çавăн пекех хуласемпе рабочи поселоксенче пурăнакансем, государство кивçен парса пулăшнипе 1951 çулта пурăнмалли çуртсем 27 миллион тăваткăл метр лаптăк чухлĕ тунă. Кунсăр пуçне ялсенче 400 пине яхăн пурăнмалли çуртсем тунă.

VII. Таварçаврăнăшĕ вăйланса пыни

1951 çулта совет суту-илĕвĕ малалла вăйланса пынă. 1950 çулта промышленность тата ялхуçалăх енĕпе çĕнĕ çитĕнӳсем тунă май, ĕç тухăçлăхĕ ӳснĕ тата продукцин хăйне ларакан хакĕ йӳнелнĕ май, Правительство 1951 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа куллен кирлĕ таварсен хакĕсене çĕнĕрен, карточка системиче улăштарнă хыççăн тăваттăмĕш хут, йӳнетнĕ. Тавар хакĕсене çĕнĕрен йӳнетни совет укçи-тенкине тата ытларах тĕреклетрĕ, вăл укçапа тавар ытларах илмелле пулса тăчĕ, халăха тавар сутасси ӳсрĕ.

1951 çул хушшинче государство тата кооператив суту-илӳ енĕпе, танлаштармалли хакпа илсен, халăха 1950 çулхинчен 15 процент ытларах тавар сутнă. Уйрăм таварсем енĕпе тавар сутасси çакăн пек ӳснĕ: аш-какай—32 процент, колбаса таврашĕ—29 процент, пулă продукчĕсем—14 процент, выльăх-чĕрлĕх çăвĕ—10 процент, ӳсентăран çăвĕ—40 процент, сĕт тата сĕт продукчĕсем—35 процент, çăмарта—20 процент, сахăр—29 процент, кондитер изделисем—13 процент, чей—29 процент, улма-çырла—33 процент, пусма тавар—18 процент, пурçăн пирсем—26 процент, çĕленĕ япаласем—14 процент, сăран атă-пушмак—11 процент, сĕтел-пукан—50 процент, халăха кирлĕ строительство материалĕсем—45 процент, супăнь—13 процент, радиоприемниксем—26 процент, сехетсем—15 процент, çĕвĕ çĕлемелли машинăсем—29 процент, фотоаппаратсем—38 процент, велосипедсем—86 процент. Холодильниксем, кĕпе çумалли машинăсем, тусан тасатмалли машинăсем сутасси темиçе хут ӳснĕ.

Государствăпа кооперации суту-илĕвĕнче магазинсемпе лавкасен шучĕ ӳснĕ. Иртнĕ çулта 8 пине яхăн çĕнĕ магазин уçнă.

1951 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, колхоз пасарĕсенче халăха ялхуçалăх продукчĕсем, уйрăмах çăнăх, кĕрпе, сало, кайăк-кĕшĕк, çăмарта, улма-çырла тата пыл сутасси чылай ӳснĕ.

VIII. Рабочисемпе служащисен йышĕ тата ĕç тухăçлăхĕ ӳсни

СССР халăх хуçалăхĕнче рабочисемпе служащисен йышĕ 1951 çул вĕçĕнче 40,8 миллион çын, 1950 çул вĕçĕнчипе танлаштарсан 1 миллион та 600 пин çын ытларах пулнă. Промышленноçра, ялхуçалăхĕнче, вăрман хуçалăхĕнче, строительствăра тата транспорт çинче рабочисемпе служащисен йышĕ çулталăк хушшинче 1 миллион та 250 пин çын, аслă шкулсенче, ăслăлăхпа тĕпчев тата сывлăх учрежденийĕсенче 250 пин çынна яхăн, суту-илӳре тата çурт-йĕрпе коммунальнăй хуçалăхра 100 пин çын ытла ӳснĕ.

1951 çулта, иртнĕ çулхисенчи пекех, çĕршывра ĕçсĕрлĕх пулман.

Иртнĕ çулта ремесло, чугун çул, сăрт-ту промышленность училищисенчен, фабрикăпа завод шкулĕсенчен, сăрт-ту промышленность шкулĕсенчен 365 пин çамрăк квалификациллĕ рабочисем пулса вĕренсе тухнă, вĕсене пурне те промышленноçра, строительствăра тата транспорт çинче ĕçлеме янă.

Пĕчченшерĕн тата бригаднăй меслетпе, çавăн пекех курссенче вĕрентсе 1951 çулта 7 миллион рабочипе служащи квалификацине хăпартнă.

Промышленноçра ĕçлекен рабочисен ĕç тухăçлăхĕ 1951 çулта, 1950 çултипе танлаштарсан. 10 процент ӳснĕ. Вăл шутра машинăсем тăвакан промышленноçра 14 процент, хура металлургире 9 процент, тĕслĕ металлургире 6 процент, çĕр кăмрăк промышленноçĕнче 8 процент, нефть промышленноçĕнче 9 процент. хими промышленноçĕнче 9 процент ӳснĕ. Строительствăра ĕçлекен рабочисен ĕç тухăçлăхĕ 1951 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, 9,5 процент ӳснĕ.

IX. Культура строительстви, сывлăх ĕçĕ, хула благоустройстви

1951 çулта социализмлă культурăн мĕнпур облаçĕсенче малалла çитĕнӳсем туса пынă.

Совет Союзĕнче вĕренекенсен йышĕ, мĕнпур вĕренĕве пĕрле илсен, иртнĕ çулта 57 миллион çын пулнă.

Çулталăк хушшинче çичĕ çул вĕренмелли шкулсемпе вăтам шкулсен шучĕ 5 пине яхăн ӳснĕ. Пиллĕкмĕш-вуннăмĕш классенче вĕренекенсен йышĕ 2 миллион та 500 пин çын таран ӳснĕ.

1951 çулта 887 аслă шкулта (заочно вĕренекенсене шутласан) 1 миллион та 356 студент вĕреннĕ, ку вăл 1950 çулхинчен 108 пин çын ытларах пулать. 3.543 техникумра ытти специальнăй шкулсенче (заочно вĕренекенсене шутласан) 1 миллион та 384 пин çын вĕреннĕ. ку вăл 1950 çулхипе танлаштарсан 86 пин çын ытларах пулать.

1951 çулта аслă шкулсенчен 201 пин çамрăк специалист, техникумсенчен 262 пин çамрăк специалист вĕрентсе кăларнă.

Аслă шкулсенчен тата техникăллă вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă специалистсен пĕтĕмĕш йышĕ 1951 çулта. 1950 çулхипе танлаштарсан, 8 процент ытларах пулнă.

1951 çулта аслă шкулсенче тата ăслăлăх учрежденийĕсенче 24 пин ытла аспирант наука ĕçĕсем тума хатĕрленĕ.

Наука, изобретени, литература тата искусство енĕпе уйрăмах чаплă ĕçсем тунăшăн 1951 çулта 2.694 ученăя, инженерсене, агрономсене, литературăпа искусство работникĕсене, рабочисемпе ялхуçалăхĕнче малта пыраканăсене Сталинла премисен лауреачĕ ятне панă.

1951 çулта çĕршывра тĕрлĕ библиотекăсем 350 пин ытла пулнă. Вĕсем государство тата обществăллă организацисен аллинче тăраççĕ. Кĕнекесен шучĕ 700 миллион экземпляр пулнă.

Киноустановкăсен шучĕ 1951 çулта, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 4 пин таран ӳснĕ. 1951 çулта театрсемпе киносене çӳрекенсен шучĕ 1950 çулхинчен 12 процент ытларах пулнă.

1951 çулхи çура 5 миллион ытла ачасемпе çитĕнмен ачасем пионер лагерĕсенче, ача санаторийĕсенче канна, экскурсисемпе туристсен базисенче пулнă, çуллахи вăхăтра ача сачĕсемпе, ача сурчĕсемпе, ача яслисемпе пĕрле организованно дачăллă вырăнсене канма кайнă.

1951 çулта больницăсен, сыватмалли çуртсен, диспансерсен тата ытти сывлăх учрежденийĕсен, çавăн пекех санаторисемпе канмалли çуртсен шутне малалла ӳстернĕ. Больницăсемпе сыватмалли çуртсенче койкăсен шучĕ 1950 çулхипе танлаштарсан 50 пине яхăн ӳснĕ. Санаторисемпе канмалли çуртсенче 18 пин вырăн хушăннă. Врачсен шучĕ 1951 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, 6 процент ытла ӳснĕ.

Медикаментсем, медицина инструменчĕсем, оборудованисем туса кăларасси, 1950 çулхипе танлаштарсан, 36 процент ӳснĕ. Çакă вăл медицина учрежденийĕсене медикаментсем, çĕнĕ аппаратура, лаборатори оборудованийĕ тата медицина инструменчĕсем тăратас ĕçе чылай лайăхлатма пулăшнă.

1951 çулта, иртнĕ çулсенчи пекех, коммунальнăй предприятисем тăвас тата хуласемпе рабочи поселоксене лайăхлатас, водопроводсемпе канализаци тăвас, трамвайсемпе троллейбус çулĕсем тăвас тĕлĕшпе, çавăн пекех хваттерсене газсем кĕртес, ăшăтас, хула урамĕсемпе площачĕсене симĕслетес, чулсем, асфальт сарас, паркосем, скверсем, бульварсем тăвас енĕпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ.

X. Наци тупăшĕ тата халăх тупăшĕ ӳсни

СССР наци тупăшĕ 1951 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, танлаштармалла хакпа шутласан, 12 процент ӳснĕ.

Совет Союзĕнче пĕтĕм наци тупăшĕ ĕççыннисен аллинче тăрать. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем хăйсен материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерме, иртнĕ çулхи пекех, наци тупăшĕнчен тăватă пайран виçĕ пайне яхăн хăйсене илнĕ, наци тупăшĕн ытти пайĕ государство, колхозсем тата кооперативлă организацисен аллинче социализмлă производствăна аслăлатма тата государствăн пĕтĕмĕшлĕ ытти ĕçсене, обществăллă ĕçĕсене малалла аслăлатма юлнă.

Наци тупăшĕ ӳсни рабочисен, хресченсен тата интеллигенцин материальнăй пурнăçне чылай лайăхлатма, хулапа ялта социализмлă производствăна малалла аслăлатма май панă.

Совет Союзĕнчи халăхăн материальнăй пурнăçĕ лайăхланса пыни рабочисемпе служащисем илекен ĕç укçи малалла ӳссе пынинче тата колхозниксен колхозăн обществăллă хуçалăхĕнчен, çавăн пекех тата кил вырăнĕпе хăйсен хуçалăхĕнчен илекен тупăш ӳсниниче курăнса тăрать.

Кунсăр пуçне 1951 çулта, уйчепхи çулсенчи пекех, халăх государство пособийĕ шучĕпе, рабочисемпе служащисене социальнăй страховани енĕпе тӳленипе, социальнăй обеспечени тăрăх пенси илнипе, санаторисене, канмалли çуртсене, ача çурчĕсене кайма тӳлевсĕр тата çăмăллăхпа путевкăсем илнипе, нумай ача амăшĕсемпе пĕччен амăшĕсем пособи илнипе, тӳлевсĕр медицина пулăшăвĕ илнипе, тӳлевсĕр вĕреннипе тата квалификацие хăпартнипе, вĕренекенсем стипенди тата ытти çăмăллăхсем илнипе тупăш курнă. Малалла, рабочисемпе служащисем пурте, уйрăхла каласан, 41 миллиона яхăн çын икĕ эрнелĕхрен кая мар государствăран ĕç укçи илсе отпускра пулнă, чылай профессисенчи работниксем тата нумайрах вăхăта пыракан отпускра пулнă. 1951 çулта халăх государство шучĕпе асăннă тӳлевсемпе çăмăллăхсем тăрăх 125 миллиард тенкĕлĕх тупăш илнĕ.

Массăллă таварсен хакĕ йӳнелнипе, рабочисемпе служащисен ĕç укçи ӳснипе, хресченсем укçан тата продуктăн илекен тупăшĕ ӳснипе, государство шучĕпе çăмăллăхсем илнипе рабочисемпе служащисен тупăшĕ тата хресченсен тупăшĕ 1951 çулта, танлаштармалли хаксемпе шутласан, 1950 çултипе танлаштарсан, 10 процент ӳснĕ.

СССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ ÇУМĔНЧИ ЦЕНТРАЛЬНĂЙ СТАТИСТИКА УПРАВЛЕНИЙĔ.

Маршал Чойбалсан

УЛАН-БАТОР, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсенче Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн, Монголи Халăх Республики правительствин тата обществăллă организацисен руководителĕсем çырнă çакăн пек некролог пичетленсе тухнă:

Монголи Халăх Республикин премьер-министрĕ, Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн Политбюро членĕ, Монголи Халăх Республикин Аслă Халăх Хуралĕн депутачĕ, пирĕн партине халăхăн çулпуçĕ, Совет Союзĕн шанчăклă тусĕ, пире çăлакан, хӳтĕлекен, пирĕн тĕрек пулса тăнă Хорлогийн Чойбалсан нумай вăхăт хушши чирленĕ хыççăн январĕн 26-мĕшĕнче вилсе кайрĕ.

Хорлогийн Чойбалсан 1895 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнче выльăх пăхакан чухăн çын çемйинче çуралнă. Мĕн çамрăкранпах вăл пурнăçри йывăрлăхсене тӳссе сиреплесе пынă, вăл питĕ йывăр пусмăра, ют çĕршыв пусмăрçисем хытă хĕсĕрленине, феодалсем хытă эксплуатацилениине тӳссе курнă. Чойбалсан хăйĕн пĕтĕм пурнăçне Монголи халăхне ют çĕршывсен захватчикĕсемпе феодалсен пусмăрĕнчен хăтарас ĕçе пама çирĕп шут тытнă.

1918 çул вĕçленнĕ вăхăтра Чойбалсан вăрттăн ĕçлекен революциллĕ кружок тунă. Ку кружок часах Сухэ-Баторăн вăрттăн ĕçлекен революциллĕ кружокĕпе пĕрлешнĕ. Çавăнтанпа Сухэ-Баторпа Чойбалсан пĕр-пĕринпе питĕ туслă пурăнса революциллĕ ĕçсем туса пынă.

1921 çулта Сухэ-Баторпа Чойбалсан Монголи халăхĕн революциллĕ партине туса хунă. Ку парти Монголи халăхне хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешес ĕçре ертсе пынă.

Сухэ-Баторпа Чойбалсан пуç пулса тăракан парти—Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕ ертсе пынипе. вырăс пролетарначĕ пулăшнипе, Монголи халăхĕ 1921 çулта революци тунă. ют çĕршывсен пусмăрçисене çĕршывран хăваласа кăларнă. Сухэ-Баторпа Чойбалсан пирĕн халăхпа аслă совет халăхĕн тăванла туслăхĕн никĕсне хывнă, çак икĕ халăх ĕмĕр-ĕмĕрех туслă пурăнас ĕçе пуçарнă.

Халăх революцийĕн çĕнтерĕвне пурнăçласа. Сухэ-Баторпа Чойбалсан пуç пулса тăракан Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕ пирĕн халăха хамăрăн никама пăхăнман государствăна тăвас тата тĕреклетес ĕçри çĕнĕ çĕнтерӳсем патне илсе çитерчĕ.

Питĕ хастарлă, нимрен хăраман Сухэ-Батор вилнĕ хыççăн партипе государствăна ертсе пырас тĕлĕшпе пĕтĕм ĕçе Чойбалсанăн туса пымалла пулчĕ. Революци тăшманĕсене хирĕç революциллĕ пысăк хастарлăхпа, вĕсене нимĕн хĕрхенмесĕр кĕрешсе пырса, Чойбалсан ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнипе пирĕн партие тĕреклетрĕ тата çирĕплетрĕ. Чойбалсан ертсе пынипе. Ленин—Сталин вĕрентнĕ пек ĕçлесе, парти пĕртен-пĕр тĕрĕс çул-йĕр—пирĕн çĕршыва капитализмлă мар çулпа аталантармалли çул-йĕр тытса пычĕ.

Пирĕн тăван çĕршыв вăтăр çул ытла ирĕклĕ, никама пăхăнмасăр пурăннă вăхăтра малалла аталанса тата чечекленсе пычĕ. Тăван çĕршыва аталантарса тата чечеклентерсе пырас ĕçре тунă мĕнпур паха çитĕнӳсем пурте Чойбалсан юлташ ячĕпе тачă çыхăнса тăраççĕ.

Пирĕн партипе пирĕн государство историйĕнчи палăрса тăракан ĕçсене пурнăçланă çĕре Чойбалсан юлташ активлă хутшăнчĕ, вăл çав ĕçсене хавхалантараканĕ тата организацилекенĕ пулчĕ.

Чойбалсан пирĕн халăхпа аслă совет халăхĕ хушшинчи туслăха пур майсемпе те тĕреклетсе тата аталантарса пычĕ. Çак туслăх—пирĕн государствăн ирĕклĕ тата никама пăхăнмасăр пурăнассин шанчăкĕ, пирĕн мĕнпур ситĕнӳсен никĕсĕ, эпир социализм çулĕпе ăнăçлă малалла кайассин шанăçĕ пулса тăрать.

Монголипе Совет Союзĕ халăхĕсен аслă туслăхĕ совет халăхĕ Аслă Отечественнăй вăрçăра нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ чухне уйрăмах хытă тата вăйлă палăрчĕ. Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕпе Чойбалсан юлташ хавхалантарса тата ертсе пынипе Монголи халăхĕ Аслă Отечественнăй вăрçă пуçланнă кунранпах тăванла совет халăхне вăй çитнĕ таран пулăшса пырасси. ăна пирĕн тăшмана—нимĕç фашизмне çĕнтерес ĕçре пулăшасси тĕп задача пулса тăрать, тесе шутларĕ. Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕпе Чойбалсан юлташ ертсе пынипе пирĕн халăх тата пирĕн çĕршывăн хĕçпăшаллă вăйĕсем, аслă совет халăхĕпе тăванла килĕштерсе ĕçлесе, паттăр Совет Çарĕпе тачă çыхăнса, Япони империализмне аркатса тăкнă çĕрте вăй çитнĕ таран кĕрешрĕç.

Чойбалсан юлташ пирĕн çĕршыври ĕç халăхĕн анлă массисемпе тачă çыхăнса тăратчĕ. Пирĕн пĕтĕм халăх Чойбалсан юлташа, хăйĕн çулпуçне, хăйĕн ашшĕне тата тусне яланах чунтан-чĕререн юратнă, ăна халĕ те хытă юратать.

Пирĕн пĕтĕм халăх Чойбалсан юлташăн революциллĕ паха ĕçĕсне, хамăрăн Тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн. ăна чечеклентерессишĕн, кашни ĕççынни пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшса ĕçленине пысăка хурса хакларĕ.

Пирĕн халăх Чойбалсан юлташа чĕререн тав туса тата хисеплесе, ăна Монголи Халăх Республики Геройĕн аслă ятне икĕ хутчен пачĕ. Чойбалсан юлташа Сухэ-Батор орденĕсемпе, çапăçура паттăрлăха кăтартнăшăн паракан Хĕрлĕ Ялав орденĕсемпе, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, «Полярная звезда» орденĕпе тата медальсемпе наградăларĕ.

Монголипе совет халăхĕсем хушшинчи аслă туслăха тата вĕсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса пурăнассине пур майсемпе те çирĕплетес ĕçре, Аслă Отечественнăй вăрçă кунĕсенче совет халăхне пулăшу парас ĕçре, Япони империализмне аркатса тăкассишĕн кĕрешнĕ çĕрте питĕ чаплă ĕçсем тунăшăн СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Чойбалсан юлташа Ленин орденĕ иккĕ, Хĕрлĕ Ялав орденĕ иккĕ, Суворов ячĕпе тăракан пĕррремĕш степень орденĕ тата медальсем парса наградăларĕ.

Чойбалсан юлташăн пĕтĕм чаплă пурнăçĕпе ĕçĕсем пирĕн партин кашни членĕшĕн, пирĕн çĕршыври тӳрĕ кăмăллă кашни ĕççыннишĕн хамăр халăхăн ĕçне пĕтĕм вăй-хала парса, харнăр хăйне хĕрхенмесĕр туса пынин тĕслĕхĕ, пире хамăр Тăван çĕршывăн çĕнĕ чаплă çĕнтерӳвĕшĕн кĕрешме чĕнекен тĕслĕх пулса тăрать.

Пирĕн хаклă çулпуçăмăр, пирĕн тус тата кĕрешӳри юлташ, сирĕн вилтăпри çăмăл пултăр.

БАИР, БУМАЦЕНДЕ, ДАМБА, ДАНГАСУРУН, ЖАМБАЛДОРЖИ, ЛАМОЖАБ, ЛУБСАН, ЛХАМСУРУН, МАЙДАР, НОРОВСАМБУ, СОСОРБАРМА, СУРУНЖАБ, УДВАЛ, ЦЕДЫБ, ЦЕДЕНБАЛ, ШАРАП, ШИРЕНДЫБ.

Монголи халăхĕ йывăр çухату пирки хурланать

УЛАН-БАТОР, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Монголи халăхĕ хăйĕн шанчăклă ывăлĕ тата юратнă çулпуçĕ маршал Чойбалсан вилнĕ пирки питех те хурланать.

Республика столицинче — Улан Баторта, аймаксемпе соймонсен центрĕсенче, аратсем тăракан тата рабочисем пурăнакан поселоксенче—пур çĕрте те пысăк хурлăх палăрать. Пĕтĕм халăх йывăр çухату пирки хурланать. Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитетĕнчен, Аслă Халăх Хурал Президиумĕнчен, Монголи Халăх Республикин Министрĕсен Советĕнчен маршал Чойбалсан вилни çинчен пĕлтернине, çавăн пекех Чойбалсан вилнĕ пирки Министрсен Совечĕ пĕтĕм çĕршывĕпе халăх траурне ирттерме йышăннине вырăнти радиопа темиçе хутчен те вуласа панă чухне репродукторсем патне çынсем нумайăн пухăнна. Çак йывăр çухату çинчен пĕлтернине çынсем чĕререн хурланса, куççуль юхтарса итленĕ. Радиопа пĕлтернисем хушшинче пулакан перерывра траурлă кĕвĕсем тата «Интернационалăн» хăватлă музыки янăранă.

Столицăра пурăнакансем каçхине Правительство çурчĕ патне пухăннă. Çак çуртра Чойбалсан Монголи халăхĕн ырлăхĕпе телейĕшĕн хастарлă ĕçленĕ. Правительство çурчĕ патĕнче траурлă митинг пулса иртнĕ.

Улан-Батор хулин тĕп площадĕнче каçхипе прожекторсем çутатма тытăннă. Правительство çурчĕ тата Государство театрĕ çине лартнă Чойбалсанăн пысăк портречĕсене прожектор çуттипе çутатнă, портрет хĕррисене хура пусмапа эрешленĕ.

Столицăри предприятисенче нумай çынлă траурлă митингсем пулса иртнĕ. Улан Баторти промышленность комбиначĕн атă-пушмак фабрикинче пулнă митинга икĕ пин çурă ытла çын пынă. Çак комбинат маршал Чойбалсан ячĕпе тăрать. Митинга пухăннисем Монголи халăхĕн шанчăклă ывăлĕпе юратнă çулпуçĕ вилни çинчен правительство пĕлтернине питĕ хуйхăрса итленĕ. Митингра тухса каланисен сăмахĕсенче Монголи халăхĕ хăйĕн партине тата хăйĕн çулпуçне питĕ юратса тата чĕререн парăнса тăни яр-уççăн курăннă. Çав сăмахсем халăх хăйĕн речĕсене парти тавра тата таччăнрах пĕтĕçтерме, çĕршывра социализм тăвас аслă ĕçшĕн, Чойбалсан кĕрешнĕ пек, пĕтĕм вăя хурса кĕрешме, монголи халăхĕпе совет халăхĕ хушшинчи нихçан хавшалми тăванла туслăха пур майсемпе те çирĕплетессишĕн тата аталантарассишĕн кĕрешме пысăк тупа тунă пек илтĕнеççĕ.

— Пирĕн çухату питех те йывăр,—тет митингра Промкомбинатри ударник Доржин Самбу,—анчах пирĕн çулпуçăмăрăн ĕçĕ ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнĕ. Эпир, унăн ученикĕсем, Сухэ-Баторпа Чойбалсан тунă пирĕн парти ĕçне ялан тӳррĕн туса пырăпăр тата хамăрăн пĕтĕм вăя пирĕн çĕршывра социализм тăвас ĕçе парăпăр, тесе тупа тăватпăр.

Столицăри виççĕмĕш хорон клубĕнче (хорон—хулари административлă пай. — Ред.) пулса иртнĕ митинга пин çын ытла пухăннă.

«Монголи халăхĕ,—тет митингра пулнă Чойнхор арат,—çав тери пысăк çухату турĕ. Пирĕн юратнă çулпуçăмăр, пирĕн Чойбалсан вилчĕ. Çак хурлăхлă йывăр сехетре эпир партипе правительство тавра тата таччăнрах пĕтĕçĕпĕр, пирĕн хаклă çулпуçăмăр хушса хăварнине пурнăçа кĕртессишĕн, пирĕн революциллĕ халăх стройне ывăнма пĕлмесĕр çирĕплетессишĕн. Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, Чойбалсан юлташ хăйĕн пĕтĕм çутă пурнăçне парса кĕрешнĕ аслă ĕçе çĕнтерӳллĕн вĕçлессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕпĕр».

Хурлăхлă митингсем Улан-Баторти ытти предприятисенче те пулса иртнĕ.

Колхозсен ăмăртăвĕ

Иртнĕ çулăн пуçламăшĕнче пĕрлешсе пысăкланнă «Красное Сормово», Энгельс ячĕпе тăракан тата «Свобода» колхозсем артель хуçалăхне нумай енлĕ аталантарас, цăйлă тырпул туса илес, общественлă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне чылай ӳстерес тĕлĕшпе социализмла ăмăртса ĕçлеме йышăнчĕç. 1949 çултанпа ĕнтĕ вĕсем пĕр-пĕрин ӳсĕмĕсемпе çитĕнĕвĕсене сăнаса тăраççĕ, кашнинех хăйĕн кӳршисенчен юласшăн мар. Пĕр колхоз пĕр енĕпе мала тухсан, тепри вара урăх ĕçре те пулин иртсе кайма тăрăшать. «Красное Сормово» колхоз çуракине иртерех тухса, ăна кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа вĕçленĕ, çул-йĕр строительстви планне районта чи малтан тултарнă. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулнă. Энгельс ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ тырпула иртерех вырса пĕтернĕ. Государствăна тырă панă вăхăтра «Красное Сормово» колхоз каллех мала тухнă, иккĕмĕш куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав илнĕ. Кĕркуннепе хĕллехи сезонта вăрман хатĕрлеме тытăнсан, ăмăрту татах та вăйланнă. Ку ĕçре вара Энгельс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем мала тухнă, ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ.

Кăçалхи январь уйăхĕнче виçĕ колхоз ăмăрту итогĕсене тĕрĕслерĕç. Энгельс ячĕпе тăракан тата «Свобода» ялхуçалăх артелĕсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн, çак колхозсен представителĕсем «Красное Сормово» колхозра пулчĕç.

«Красное Сормово» колхозăн нумай енлĕ аталанакан хуçалăхĕ ăмăртса ĕçлекен колхозсен представителĕсене питех те килĕшрĕ. Ку колхоз совет агрономи кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçласа, çĕрĕç культурипе ӳстерсе пырса, мĕнпур çĕр лаптăкĕ синчен кашни гектартан вăтам шутпа 90 пăта яхăн тĕштырă пухса кĕртнĕ. Волков юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади 14 гектар çинче кашни гектартан 26,7-шер центнер сурхи тулă, Петров юлташ бригади—31,5-шер центнер кĕрхи тулă туса илнĕ.

Артель членĕсем 1952 çулта тырпул тухăçлăхне тата та ытларах ӳстерме ĕмĕтленеççĕ. Çак тĕллевпе уй-хир бригадисем хушшинче ăмăрту вăйлансах пырать. Колхоз иртнĕ çулта сурхи тырăсем акмалли пĕтĕм лаптăка 22—24 сантиметр таранăш сухаласа кĕрхи çĕртме туса хăварнă. Сурхи вăрлăхĕсем çителĕклĕ, вĕсене пĕтĕмпех сортласа тасатнă. Кунта уйрăмах вырăнти тата минераллă удобренисем хатĕрлесси çине тимлĕ пăхаççĕ. Ку таранччен уя 11 пин лав ытла тислĕк, 6 пин лав торф, 4.600 лав юшкăн тăпри кăларнă, 6.170 лав торфпа тислĕкрен компост тунă, 414 центнер кĕл, 270 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. 80 тоннăна яхăн минераллă удобренисем кӳрсе килнĕ, çак кунсенче татах 230 тонна кӳрсе килмелле. 616 гектар çинче юр тытнă.

Иртнĕ çулта фермăсенчи выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе те паллă çитĕнӳсем тунă. Колхоз общественлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана пур йышпи выльăхпа та тултарнă.

Фермăри ĕçсене чылай механизациленĕ. Сĕт-су фермине автопоилкăсем лартнă. Выльăх апачĕ хатĕрлеме зернодробилка, 2 кормозапарник, соломорезка, силосорезка, çĕрулми çăвакан, вĕтетекен тата ытти машинăсем те пур. Çав механизмсем пурте электромоторпа ĕçлеççĕ. Выльăхсене улăма вĕтетсе тата пĕçерсе çитереççĕ, ăшă шывпа шăвараççĕ.

Колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци кадрсем хатĕрлес ĕç çине тимлĕ пăхаççĕ. Фермăра ĕçлекенсем пурте виçĕ çуллăх зоотехника курсĕнче вĕренеççĕ. Çавăнпа вĕсем хăйсен ĕçĕнче зоотехника наукин çитĕнĕвĕсемпе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракан колхозсен опычĕпе анлă усă курма тăрăшаççĕ.

Колхоза нумай енлĕ аталанса пыракан тĕреклĕ хуçалăх тăвас тĕлĕшпе те хăшпĕр ӳсĕмсем тунă. Иртнĕ çулта кирпĕч производстви организациленĕ. Малтанхи çулах 40 пин кирпĕч хатĕрленĕ, кăçалтан пуçласа çулсерен 100-шер пин кирпĕч çапмалла, 2,5 гектар çинче сад пур. Çавăнпа пĕрлех хăмла лартса тăвас, пурçăн хурчĕсемпе хурт-хăмăр ĕрчетес, пĕвесемпе кӳлĕсенче пулă ĕрчетес ĕçсем анлă саралнă. Колхозăн хăйĕн электростанци, радиоузел, телефон коммутаторĕ, общественлă мунча, столовăй, пекарня, клуб, библиотека пур. Иртнĕ çулта водопровод туса пĕтерсе ĕçе янă. Артель хуçалăхĕ пилĕк çуллăх план тăрăх аталанса пырать.

Колхозниксен пурнăçĕ лайăхланнăçемĕн лайăхланса пырать. Кашни килте—электричество, радио, хаçат-журнал.

Энгельс ячĕпе тăракан тата «Свобода» колхозсен представителĕсем нумай курчĕç, нумай вĕренчĕç. Çав вăхăтрах ăмăртакан колхозсен çитменлĕхĕсене те тĕплĕн тишкерчĕç.

Мĕншĕн «Свобода» колхоз ăмăртура юлса пынă-ха? Тӳрех калас пулать, ку колхозра çĕрĕç культурине лайăхлатассишĕн кирлĕ пек тăрăшмаççĕ, куракăсем акса тумалли пусă çаврăнăшĕ çине куçассине вăраха тăсаççĕ, тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес тата колхоз хуçалăхне аталантарас ĕçсенче резервсемпе усă курма тăрăшмаççĕ. Акă, колхозăн улăхĕсем торфпа пит пуян. Анчах колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци торфа хакламаççĕ Колхоз торфпа çĕре çемçетес ĕçре пĕлтĕр те çителĕксĕр усă курчĕ, кăçал вара ăна уя кăларма пачах тытăнман Ĕç вăйне тĕрĕс организацилемен пирки колхозниксен пысăк пайĕ çулсеренех колхоз производствине хутшăнмасăр юлать, ĕçкунĕсен çулталăкри минимумне тултараймасть.

Тепĕр çитменлĕх вăл—правлени членĕсен, ялти активăн артель хуçалăхне аталантарас ĕçри кĕрешӳре пуçарулăх çителĕксĕрри, малта пыракансен опычĕпе кирлĕ таран усă курма пĕлменни. Кунта ялхуçалăхĕнчи çĕнĕ меслетсемпе наука çитĕнĕвĕсене колхоз производствинче пурнăçласси питех те çӳрĕк пырать. Пĕтĕм ĕçе кивĕ меслетсемпе туса пыраççĕ, ялхуçалăх машинисемпе çителĕксĕр усă кураççĕ, электростанцин хăвачĕ вăйĕпе общественлă хуçалăха аталантарас ĕçре халлĕхе кирлĕ таран усă курмаççĕ. Çак çăлтавсене пула «Свобода» колхоз виçĕ колхоз хушшинче тунă социализмлă договорти обязательствăсене пурнăçлаймарĕ.

1952 çулта вăйлă тырпул туса илес, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне чылай ӳстерес, общественлă хуçалăха нумай енлĕ аталантарас, ялхуçалăх ĕçĕсене агротехникăллă чи лайăх срокĕсенче иртерес тĕлĕшпе «Красное Сормово», Энгельс ячĕпе тăракан, «Свобода» колхозсем хăйсен хушшинче социализмлă договор туса, пысăк обязательствăсем илчĕç. Çак ăмăртăва хутшăнма Сталин ячĕпе тăракан колхоз та килĕшрĕ. Кашни гектартан вăтам шутпа 100 пăтран кая мар тĕштырă, 30 пăт кантăр вăрри, 35 пăт кантăр сӳсĕ, 900 пăт çĕрулми, 1.500 пăт тымарçимĕç туса илмелле, ытти ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне те ӳстермелле; кашни ĕнерен 1.450 килограмм сĕт суса илмелле, кашни сурăхран 3 килограмм çăм касса илмелле, кашни чăхран 110 çăмарта илмелле; çуракине 10 ĕç кунĕнче иртермелле; государствăна тырă октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне, ытти ялхуçалăх продукчĕсене ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне парса татмалла.

Колхоз хресченĕсен хастарлăхĕ пысăк. «Илнĕ обязательствăсене чыслă пурнăçласшăн. ăмăртура мала тухассишĕн ырми-канми кĕрешни—Тăван çĕршыв вăйхăватне, пĕтĕм тĕнчери мир тĕрекне çирĕплетес çĕре хывнă колхоз ĕçченĕсен парни пултăр».—теççĕ тăватă колхозри колхозниксемпе колхозницăсем.

П. СЕМЕНОВ.

Муркаш районĕ.



Шупашкарти пир-авăр комбиначĕ техника тĕлĕшĕнчен малта тăракан оборудованипе пуянланса пырать. Чăваш çамрăкĕсем кĕске вăхăтра кăткăс техникăна лайăх ĕçлеттерме хăнăхаççĕ, ĕç нормине ăнăçлă тултарса пыраççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: стахановка Иванова юлташ çип арлакан оборудовани ĕçленине тĕрĕслет.

Б ТИМКИН фотоӳкерчĕкĕ.

Ял Совечĕн вăйĕ—активпа тачă çыхăнса ĕçленинче

(Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Паникасси ял Совет исполком председателе Е. Семенова юлташ каласа пани)

Колхозлă ялти хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырасси ял Совечĕсен ĕçĕнче тĕп вырăнта тăрать Депутатсене, ялахри комисси членĕсене, мĕнпур актива ĕçе буллен хутшăнтармасан ял Совечĕсем хуçалăхпа культура строительствинче тăракан задачăсене ăнăçлă пурнăçлама пултараймаççĕ.

Паникасси ял Совечĕ çулсерен çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнӳсем туса пырать Ял Советне кĕрекен «Коммунизм» колхоз иртнĕ çулта тухăçлă тырпул тата выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе чылай ӳсĕмсем турĕ. Халĕ «Коммунизм» колхозăн хуçалăхĕ пысăк. Нумай пулмасть хăма суракан завод тунă. Ялта стационарлă киноустановка пур.

Колхозлă ялсен малашлăхĕ пирĕн ял Совечĕ умне çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕ. Вĕсене ăнăçлă пурнăçлас тесен, ял Совечĕн тата унăн депутачĕсен хăйсен ĕçĕсене татах та вăйлатмалла.

Пирĕн ял Советĕнче пурĕ 14 депутат. Вĕсен шутĕнче колхоз председателĕ В Давыдов, колхозри пулăшу касси председателĕ М. Егорова, пуçламăш партоорганизаци секретарĕ Г. Герасимов, колхозник Ф. Ефимов, сысна ферми заведующийĕ Л. Антонов, учительница А. Рукавишникова, финанс агенчĕ Е. Ефимова тата ытти юлташсем. Ял Совечĕн ялахри комиссийĕсем хăйсем тавра ялти активистсене нумай пĕрлештерсе тăраççĕ. Активистсем пирĕн кулленхи ĕçре пысăк шанăç пулса тăраççĕ. Депутатсемпе, ялахри комиссисен председателĕсемпе членĕсем ял Совет исполкомĕ умне çĕнĕ ыйтусем нумай кăларса тăратаççĕ. Акă, сăмахран, ялăн сăн-сăпатне лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси председателĕ Г. Александров юлташ ялти виçĕ çăла, кĕпере тата колхоз правлени çурчĕ умĕнчи çула юсама сĕнӳ пачĕ Эпир депутат сĕнĕвне сессире пăхса тухрăмăр, çăлсем юсарăмăр, çĕнĕ кĕпер турăмăр.

Актив пулăшнипе эпир ял Совет сессийĕсемпе исполком ларăвĕсене нумай çĕнĕ ыйтусене сӳтсе явать ăр. Ялти фельдшер пункчĕн заведующийĕ Г Андреев, акушерка М Тимофеева, трахома сестри Т. Григорьева ял Совет исполкомĕ умне ялта куç чирне пĕтерес ыйтăва лартрĕç. Ял Совечĕ вĕсен пуçарăвне ырларĕ. Çак ыйтăва сессире ларттичен медицина работникĕсем ялти кашни киле çӳресе чирлекенсене шута илчĕç, вĕсемпе калаçусем ирттерчĕç Ял Совечĕн сессийĕ куç чирне пĕтермелли мероприятисем палăртрĕ. Çакăн хыççăн ку чире пĕтересси чылай вăйланчĕ. Иртнĕ çулта Паникасси ял Советĕнче чылай çынна куç чирĕнчен сыватнă.

Ялти шкулта вĕренекен ачасем валли классем çитместчĕç. Иртнĕ суйлавра суйлавçăсем Паникасси ялĕнче çĕнĕ шкул çурчĕ тума наказ пачĕç. Ял Совечĕ çак наказа пурнăçласа çĕнĕ шкул çурчĕ лартрĕ Культурăпа çутĕç комиссийĕ пуçарнипе ял Совечĕ библиотекари кĕнекесен фондне 14 пине çитерчĕ, иртнĕ çулта кăна виçĕ пин тевкелĕх кĕнеке туяннă.

Ялта культурăллă-массăллă ĕç чылай лайăхланчĕ. А Марневапа Т. Дьяконова агрономсем колхозниксем хушшинче мичуринла агробиологи науки вĕрентĕвне сарас тĕлĕшпе Ял Советне тăтăшах пулăшса пыраççĕ. Вĕсем колхозниксем хушшинче агротехника ыйтăвĕсем тăрăх иртнĕ çулта кăна 12 калаçу ирттернĕ.

Колхоза организацийĕ хуçалăх тĕлĕшпе çирĕплетесси ял Совечĕн ĕçĕсенче тĕп вырăнта пулмалла. «Коммунизм» колхоз ял Совет депутачĕ В Давыдов юлташ ертсе пырать. Иртнĕ çулта колхоз пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ Вăл государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçларĕ, выльăх чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана тултарчĕ, укçа-тенкĕ тупăшне 375 пин тенке çитерчĕ.

Бюджет—ял Совечĕн хуçалăхпа культура строительствинчи ĕçĕсене кăтартса тăракан тĕкĕр. Ял Совечĕ бюджета тупăшпа расход статьисем тăрăх тултарассишĕн куллен тăрăшать. Иртнĕ çулхи бюджета пирĕн ял Совечĕ 120 процент тултарнă, заем укçине пухса пĕтернĕ, финанс планне кашни кварталта ăнăçлă тултарса пынă Çак ĕçре бюджетпа финанс комисси председателĕ Н. Васильев юлташ, финанс агенчĕ Е. Ефимова юлташ тăрăшса ĕçленине палăртас пулать.

Тăван çĕршыва йывăç нумай кирлине шута илсе, вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн ял Совечĕ нумай ĕçсем туса ирттернĕ.

Паникасси ял Совечĕ депутатсемпе, активпа, ĕççыннисемпе тачă çыхăнса ĕçленине пула государство умĕнче илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн татах та лайăх. çĕнĕ хăватпа ĕçлет, 1952 çулта хуçалăхпа культура строительствинче тăракан задачăсене куллен пурнăçлассишĕн тăрăшать.

Финанс планне ирттерсе тултарар!

Малтан тунă отчетсем тăрăх Чăваш АССР-ĕн 1951 çулхи бюджечĕ пĕтĕмĕшпе илсен ăнăçлăн пурнăçланнă.

Республикăри апат-çимĕç, вăрман, çурт-йĕрпе коммунальнăй хуçалăх предприятийĕсем, автомобильнăй транспорт, хăйсен 1951 çулхи тупăшĕнчен укçатенкĕ уйăрма пăхнă обязательствăсене чыслă пурнăçланă. Çав вăхăтрах сутуилӳ организацийĕсем иртнĕ çулта хăйсен ĕçĕсене çителĕксĕр туса пынипе бюджет тăрăх йышăннă обязательствăсене пурнăçламан. Государство суту-илӳ тупăшĕнчен бюджет тăрăх укçа-тенкĕ уйăрмалли плана 40,7 процент тултарман, ку вăл иртнĕ çулхи розничнăй тавар çаврăнăш планĕ 5,4 процент тулманнинчен, таварпа тирпейсĕр тата тăкаклă усă курнинчен килнĕ.

Республикăри чылай районсенчи потребительсен тата промысла кооперацийĕсем, кино кăтартакан предприятисем хăйсен ĕçĕсене çителĕксĕр туса пынипе государство умĕнче парăмра тăраççĕ.

Хăшпĕр районсенче уйрăм çынсенчен тата колхозсенчен укçа-тенкĕ пухас ĕçе хакламаннипе иртнĕ çулта ялхуçалăх налог укçи пухмалли плана тултарса çитермен, пĕччен пурăнакан е сахал çемьеллĕ çынсенчен илекен налог укçипе те тӳлесе татман. Пĕр çултан тепĕр çула куçса пыракан тӳлевсем юлнă пирки, районпа ял тата поселок Совечĕсен бюджечĕсем пурнăçланмасăр пыраççĕ. Ку тĕлĕшпе Шăмăршă, Хĕрлĕ Чутай, Октябрьски, Елчĕк, Первомайски, Шăхасан тата ытти хăшпĕр районсем айăплă. Çак районсенче финанс работникĕсем укçатенкĕ пухас ĕçпе кирлĕ пек ĕçлемен.

Йĕпреç, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ, Çĕмĕрле, Етĕрне районĕсем пĕлтĕрхи 1-мĕш кварталти укçа-тенкĕ пухмалли плана ăнăçлă тултарнă, анчах та ытти виçĕ кварталĕнче ку ĕçе çителĕксĕр туса пынине пула плана тултарасси кая юлнă.

Комсомольски, Чкаловски, Шăмăршă, Елчĕк районĕсем государство тупăшĕсен планне тултарассишĕн начар ĕçленĕ. Район Совет исполкомĕсем суту-илӳ организацийĕсем япăх ĕçленипе килĕшсе ларнă, районсене вăхăтра тавар илсе пыма хистемен. Ку районсенче ял Совечĕсенчи шкулсем, сывлăх, культурăпа çутĕç тата ача-пăча учрежденийĕсенче тумалли мероприятисем валли укçа-тенкĕ çителĕксĕр уйăрнă.

Республикăри чылай ял Совечĕсем 1951 çулхи финанс планне уйăхран-уйăха, кварталтан квартала ăнăçлă тултарса пынипе хăйсен бюджечĕсене лайăх пурнăçларĕç. Иртнĕ çулхи IV-мĕш квартал итогĕсем тăрăх укçа-тенкĕ пухас ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартса пынăшăн Чăваш АССР Финанс министрĕн приказĕпе 48 налог агентне премi памалла тунă, 53 агент пултарулă ĕçленине палăртнă. Премi илнисем хушшинче Улатăр районĕнчи финанс пайĕн налог агенчĕсем Пличускин, Рыбаков юлташсем, Етĕрне районĕнчи финанс пайĕн налог агенчĕсем Миронов, Яковлев, Грибова юлташсем, Çурачăк районĕнчи финанс пайĕн налог агенчĕсем Антоновпа Артемьев юлташсем т. ыт. те. Премi илнисем хăйсен участокĕсенче укçа-тенкĕ пухмалли плана срокчен тултарассишĕн пысăк ĕçсем туса ирттернĕ.

Республикăри финанс планне тултарас тĕлĕшпе малта пыракан район тата ял Совечĕсенче массăллă-ăнлантарулă ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Финанс планне ирттерсе тултарас ĕçе чылай активистсене, ялахри бюджетпа финанс комиссийĕсене тăтăшах хутшăнтарнă. Партипе комсомол организацийĕсем укçа-тенкĕ пухмалли плана ăнăçлăн тултарас ĕçре пысăк пулăшу панă. Ку районсемпе ял Совечĕсенче тӳлевçĕсен шутне лайăх йĕркеленĕ, налогпа страховани тӳлевĕсене срокра тӳлеме ĕççыннисене асăрхаттарса тăнă. Финанспа бюджет планне тултарас ĕçе малта пыракан ял Совет председателĕсем пысăк вырăна хураççĕ, плана тултарассишĕн куллен тăрăшса ĕçлеççĕ.

1952 çулхи январĕн 15-мĕшĕ тĕлне финанс планне тултарас тĕлĕшпе ĕçленинчен çакă курăнать. Хăшпĕр район, ял Совет руководителĕсем ĕçе кампанилле çеç тăваççĕ, штурмовщина йĕркипе ĕçлеççĕ.

Первомайски, Советски, Элĕк, Етĕрне районĕсем пĕрремĕш квартал планне 5—6 процент кăна тултарнă, Шăмăршă районĕ 1,2 процент анчах тултарнă.

Ĕççынни депутачĕсен район, ял Совет исполкомĕсен председателĕсемпе районти финанс пайĕн заведующийĕсен çакна асра тытмалла: 1952 çулăн пĕрремĕш кварталти финанс планне тултарниччен çулталăкри финанспа бюджет планне ăнăçлă пурнăçлани килет.

Массăллă-ăнлантарулă ĕçе ĕççыннисем хушшинче анлăн сарса, кашни тӳлевçĕн ответлăхне хăпартмалла, государство умĕнче тăракан обязательствăсене чыслă пурнăçлассишĕн тăрăшмалла. 1952 çулăн пуçламăшĕнчех ĕççыннисен пĕрлехи пухăвĕсенче самообложени хисепне палăртмалла, тӳлевçĕсем извещение алла илсенех укçа пухма пуçламалла. Самообложени укçи шкулсемпе вулав çурчĕсем, клубсемпе библиотекăсем, сывлăх учрежденийĕсем валли тата ял сăн-сăпатне илемлетме кайни çинчен ял çыннисене тăтăшах ăнлантарса пымалла. Самообложени укçине вăхăтра тата пĕтĕмĕшпе тӳлесе татни ĕççыннисен пĕрлехи пухăвĕсенче палăртнă мероприятисене ăнăçлă тата пахалăхлă пурнăçлама май парать.

Республикăри финанс органĕсен февралĕн 22-мĕшĕччен вырăнти Советсем пулăшнипе пĕччен пурăнакансенчен тата сахал çемьеллĕ çынсенчен илекен налог укçин извещенийĕсене тӳлевçĕсене памалла.

Колхозсен çулталăкри отчечĕсене пăхса тухассине кăçалхи çул пысăк пахалăхпа йĕркелемелле. Ялхуçалăх пайĕсемпе финанс органĕсен колхозсен çулталăкри ĕçĕсене тĕплĕн пăхса тухса ĕçе татах та лайăхлатассишĕн тивĕçлĕ кăтартусем памалла.

Республикăри финанс органĕсен ялхуçалăх налогĕпе страховани йĕркипе укçатенкĕ пухассине халех хатĕрленмелле.

Республикăри министерствăсен, ведомствăсен, центральнăй учреждени руководителĕсен кăçалхи çулăн пĕрремĕш кварталĕнче предприятисемпе учрежденисен тата организацисен 1951 çулхи çулталăкри отчечĕсемпе балансĕсене çирĕплетмелле. Предприятисемпе учрежденисен ĕçĕсене тишкерсе пăхса тухса палăртнă çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерме тăрăшмалла.

Ĕç тухăçлăхне хăпартасси, туса кăларакан продукци пахалăхне лайăхлатасси, укçа-тенке, чĕртавара, çунтармалли япаласене, электроэнергие куллен перекетлесси предприятисемпе учрежденисен тата организацисен руководителĕсен, рабочисемпе колхозниксен тата совет интеллигенцийĕн ĕçĕсенче тĕп вырăн йышăнса тăмалла.

Иртнĕ çулхи финанс ĕçне сӳтсе явнă чух пур çитменлĕхсене те тĕплĕн палăртмалла. Социализмлă ăмăртăва массăсем хушшинче анлăн сарса ярса кашни районпа хула, поселокпа ял Совечĕсен финанспа бюджет планне ăнăçлă тултарассишĕн тăрăшмалла.

В. ТАВРИН,

Чăваш АССР Финанс министрĕн заместителĕ.

Хастарлă хĕрсем

Кам савăнмасть ĕнтĕ фермăра ĕçлекен хĕрсене курсан. Вĕсем шурă халат тăхăннăскерсем, иртсе пынине кам савăнса пăхмĕ. Колхозри каччăсем вĕсене чĕререн кăмăллаççĕ. Хĕп-хĕрлĕ, чăп-чăмăр цит-куçлă хĕрсем сĕт тултарнă бидонсем йăтса пынине, запарникрен ăшшăн кулса тухнине курсан, чун çĕкленет. Тĕреклĕ те хаваслă хĕрсем колхозра тăрăшса ĕçлеççĕ, пăлан пек ĕнесем çитĕнтереççĕ, тулăх сĕт илеççĕ.

Колхоза кĕриччен чухăн çынсен ачисем сĕт ĕçсе, аш-какай çисе курман. Халĕ акă епле пурăнатпăр: фермăра кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе выльăх, сĕтел çинче сĕт, ашкакай. Çак тулăх пурнăçа колхоз, Сталин юлташ туса пачĕç.

Фермăра ĕçлекенсем çинчен шухăшласанах, мана Мичурин ячĕпе тăракан колхоз ферминче ĕçлекен хĕрсем: дояркăсем, сысна пăхакансем, пăру пăхакансем аса килеççĕ. Ялта чухне вĕсемпе пĕрле урама тухаттăмăр, юрлаттăмăр, ташлаттăмăр. Фронта кайсан темле йывăр самантсенче те, вĕсен сăмахĕсем чĕрене ăшăтса тăратчĕç, вĕсен сырăвĕсем салтак хутаççинчех çӳретчĕç. Акă пала та вăл хĕрсем ман умра.

Лăпкă ир Çил йăмра турачĕсене хуллен силлет. Кас анчах çунă çемçе юр тин тухнă хĕвел çуттинче ылтăн-кĕмĕл пек йăлтăртатать.

Мичурин ячĕпе тăракан колхоз фермисем ял хĕрринчи тӳрем вырăна вырнаçнă. Инçех те мар кура вăрман. Фермăн пысăк, çутă витисем, шап-шурă шуратнă запарник, çӳлĕ силос башнисем инçетренех курăнаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх йышĕ ӳснĕ май, фермăсен картишĕ те асăланса пырать.

Картишре типтерлĕ, таса. Усăлтарма кăларнă ĕнесем хуллен утkаласа çӳреççĕ.

— Ĕçлес килнĕçемĕн ĕçлес килет,—

чĕвĕлтетрĕ çирĕп пӳ-силлĕ, лутра хĕр. Унăн пичĕсем мăкăнь чечекки пекех, куçĕсем савăнăçлăн выляççĕ. Çак хĕр вунă çул хушши дояркăра ĕçлет. Вăрмар районĕнче ку доярка—Матрена Константиновна Константиновăн ятне илтмен çын та çук. Вунă çул хушшинче вăл пăхакан ĕнесем пĕри те чирлемен, вилмен, пĕр ĕни те хĕсĕр пулман, кашниех тĕреклĕ, сывă пăрусем туса панă. Ĕнесене лайăх пăхса, сывă пăрусем илнĕшĕн Матрена Константиновнăна премi шучĕпе кашни çулах пĕрер пăру панă.

Ĕнесенчен пысăк тухăçлăх илес енĕпе те Матрена Константиновна лайăх ĕçлет, сĕт суса илмелли плана тултарса пырать. 1951 çулта планпа кашни ĕнерен 1.150 литр сĕт илмелле пулсан, «Звезда» ĕнерен 1.800 литр, «Мадия» ĕнерен 1.550 литр суса илнĕ, çавăн пекех ытти ĕнесенчен те тухăçлă сĕт илнĕ.

Матюк (Константинова юлташа фермăра Матюк, тесе чĕнеççĕ) кăвакарчăнсене савăнса пăхса тăчĕ те, часах силос илме утрĕ. Ĕнесем силоса питĕ юратса çиеççĕ, силос пама пуçласан, сĕт тухăçлăхĕ те ӳсрĕ. Колхоз кăçал 200 тонна силос хывнă.

Дояркăсем юрла-юрла ĕçлесе, пĕр кунлăх силос кăларчĕç. Силоса вĕсем нихăçан та темиçе куншăн кăларса хумаççĕ, апла тусан шăнса каять.

Ĕнесене силос панă хыççăн хĕрсем улăма витсе пĕçертме шутларĕç. Улăма витсе пĕçертесси, йӳсĕтесси—çĕнĕ ĕç. Ăна туна фермăра уйрăм траншея чавнă: траншея тĕпне, хĕррисене хăмапа çирĕплетнĕ. Унта туранă улăм тултараççĕ. Улăм çине хăшпĕр чухне утă çăнăхĕ, туранă тымарçимĕç, сăсăл тата урăх концентратлă апатсем хушсан, хăй тĕллĕн ăшăнасси вăйланать. Улăм çине ăшă шыв сапаççĕ, вара таптаса хытараççĕ. Кун хыççăн траншейăна шитпа хуплаççĕ те, йывăр япалапа пусăрса, çине улăм витеççĕ. Çак улăм 3—4 кун хушшинче 30—35 градус таран ăшăнать.

Улăм тутлăхне известлесе ӳстерме те пулать. Çакна шута илсе фермăра улăма известлесе çитерме тытăннă.

Улăма пăспа çемĕçтерсе выльăхсене тăрантарни çинчен каласа пама кирлĕ те мар ĕнтĕ, вăл ĕçе темиçе çултанпа туса пыраççĕ.

— Улăма тĕрлĕ майпа çемĕçтерсе çитерни питĕ усăллă. Ĕнесем çавна çитерсен ӳтлĕ пулаççĕ,— тет Матюк.

Константинова Матрена тата унпа ĕçлекен дояркăсем 1952 çулта питĕ тăрăшса ĕçлеме сăмах пачĕç, ĕнесенчен сĕт суса илмелли плана 150 процент таран пурнăçлама пулчĕç.

Лайăх ĕçлес тесен, зоотехникăна пĕлмелле. Çавăнпа та дояркăсем зоотехникăпа ветеринарине вĕренмелли 3 çуллăх курсра вĕренеççĕ. Кунсăр пуçне вĕсем илемлĕ литература кĕнекисене те нумай вулаççĕ. М. Константинова «Вутпа çулла витĕр», «Нарспи», «Чăн-чăн совет çынни çинчен» ятлă кĕнекесене вуласа тухнă

М Константинова кашни çулах 400 ĕçкунĕнчен сахал ĕçлесе илмест: иртнĕ çул 412 ĕçкунĕ туса, 1.020 килограмм тĕштырă тата ытти продуктсем те нумай илнĕ.

Колхозра ĕçлесе илнĕ пысăк тупăшпа М. Константинова çемйи çĕнĕ пӳрт лартнă. çĕнĕ кĕрĕк, çăматă, пушмак т. ыт. те нумай туяннă.

— Ĕлĕкхи саманара пулсан, эпир пуянсен машкалĕ айĕнчен тухаймас сукчĕ. Ĕмĕр тăрпшипех хĕн-хур тӳсмелле пулатчĕ. Халĕ колхозра савăнăçлă, пуян пурăнатпăр,—тет М. Константинова амăшĕ.

Фермăра М. Константинова пек хастарлă хĕрсем татах та нумай. Акă, сăмахран, сысна пăхакан хĕре, Зинаида Андреевăна, илер Унăн ашшĕ Аслă Отечественнăй вăрçăра паттăррăн çапăçса вилнĕ.

— Аттесем çапăçса илнĕ мирлĕ пурнăça тĕреклетеснĕ, тăрăшса ĕçлесчĕ,—тет Зинаида,

Вăл пурĕ 10 сысна ами пăхать. Иртнĕ çул Зинаида сыснасенчен çура илмелли плана ирттерсе тултарнă: «Белка» сысна аминчен 21 çура, «Арфа» сысна аминчен 14 çура илнĕ. Сысна çурисем илмелли 1951 çулхи плана ирттерсе тултарнăшăн Зинаида Андреевăна премилесе 3 сысна çури панă.

— Мĕнле майпа çурасем нумай илетĕр эсир?—ыйтаççĕ вара Зинаида Андреевăран кӳршĕ колхоз фермисенче ĕçлекенсем.

— Нимле секрет та çук унта. Ан ӳркен, тăрăшса ĕçле. çан çеç,—тет Зинаида.

— Çапла çеç-и вăра? Кала-ха, кала. Тен секречĕ те пур пулĕ,—теççĕ лешсем каллех.

— Ĕçе юратса тăвас пулать, Мичуринла биологи наукине вĕренмелле,—тет Зинаида. Унтан вара хăйĕн ĕçри опычĕсем çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа парать.

— Малтанах,—тет вăл,—сыснасене епле пăхса усрасси çинчен эпĕ сахал пĕлеттĕм. Ĕçе кĕрсен, сыснасене пăхасси çинчен кĕнекесем вулама тытăнтăм, малта пыракансен опычĕпе палласрăм.

Эпир сысна амисене ăшă, таса пӳлĕмре усратпăр. вĕсен айне сарса паракан улăма кашни кунах улăштаратпăр. Норма тăрăх, вăхăтра апат паратпăр. Сĕтеклĕ апатсене—чĕкĕнтĕре, кишĕре, тутлă кăшмана сыснасене парас умĕн лайăх çăватпăр та тымарçимĕç турамалли машинăпа тураса вĕтететпĕр. Çĕрулмипе тутлă кăшмансăр пуçне, ытти тымарçимĕçсене чĕрĕлле çитеретпĕр. пĕçерсе çитерсен вĕсен тутлăхĕ чакать. Кунсăр пуçне тата начартарах сыснасене пăтă пĕçерсе паратпăр. Пăтта купăста çулçисенчен, тĕштырă хутăшĕнчен, çĕрулминчен пĕçеретпĕр. Унтă çăнăх хушатпăр.

Эпир апатсене çĕпрелетсе те паратпăр. Сыснасене çулталăкĕпех çăврлаттаратпăр. Чуптарассипе çăврлаттарассине йĕркелесе пыма уйрăм план тăватпăр.

Чылай амасенчен çулталăкра 2-шер хут çăвăр илетпĕр. Халĕ эпĕ «Белка» сысна амине çулталăкра 3 хут çăвăрлаттарма шутлатăп.

Амасене чуптарас умĕн тата вĕсем пĕтĕ çӳренĕ чухне тăрантарасси пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та эпир чуптарас умĕн сыснасене белоклă тата минераллă апатсем çителĕклĕ паратпăр. пĕтĕ амасене пурă тата тăвар ярса çитеретпĕр.

Çамрăк çурасене пăхасси те пĕлсе тумалли ĕç. Çăврласан пĕр эрнеренех çурасене минераллă япаласем кирлĕ.

Зинаидăран пример илсе, сысна пăхакан А. Пчелова, Е. Федорова, М. Лаврентьева юлташсем те тăрăшса ĕçлеççĕ.

— Хамăр юлташран юлас марччĕ,—тет А. Пчелова.

...Кăнтăрла иртсен çил вăйланчĕ, вăрман енчен юр шăлса килет. Часах тăман тухрĕ. çавăрттарать кăна. Ĕнесем ĕнтĕ витере тăраççĕ. унта пӳртри пекех таса, ăшă.

Хĕрсем витери ĕçсене туса пĕтерчĕç те, пӳрте кĕчĕç. Кунта хаçатсем, журналсем, кĕнекесем. Ферма заведующийĕ коммунист Александр Никонорович çĕнĕ журнал илчĕ те:

— Итлĕр-ха, хĕрсем, эпĕ сире электричествăпа ĕне сăвасси çинчен вуласа паратăп,—терĕ.

Хĕрсем шăп пулчĕç. Матюк тутисем вăл куласа илчĕç. вăл ăшшăн кăна:

— Вуласамччĕ. Часах пирĕн фермăра та электричествăпа ĕне сумалла пулать, вĕренесчĕ,—терĕ.

Александр Никонорович фермăра ĕçлекенсем кашнă вăхăта усăллă ирттерчĕр тесе тăрăшать, ку ĕçре ăна агитаторсем Г. Яковлевпа Х. Семенова пулăшаççĕ. вĕсем калаçусем ирттереççĕ, докладсем туса параççĕ. Калаçу хыççăн хĕрсем каллех витене шăкăлтатса тухрĕç.

— Асту, ан манăр, кĕçĕр зоотехника курсĕн занятийĕ пулать,—каларĕ вĕсене Никоноров.

— Манмăпăр-çке, расписани пур вĕт,—терĕç хĕрсем.

Çапла ĕçлеççĕ Мичурин ячĕпе тăракан колхозри хĕрсем. Вĕсен ĕçне мухтамасăр иртсе те чăтма çук. Вĕсем çине пăхсан чун-чĕре хĕпĕртет:

— Акă вĕсем коммунизм тăвакансем,— тесе калас килет.

Василий АЛЕНДЕЙ.

Мичурин ячĕпе тăракан колхоз, Вăрмар районĕ.

ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

Пĕрлехи ларусенче

ПАРИЖ, январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ООН Генеральнăй Ассамблейин пĕрлехи ларăвĕнче Палестина ыйтăвне пăхса тухнă. Уйчен ку ыйтăва Политикăллă ыйтусен специальнăй комитетĕнче сӳтсе явнă. Ку ыйтупа пленума резолюци тăратнă. Ăна США, Англи тата Франци хĕснипе комитетра йышăннă. Унта Палестина тĕлĕшпе ООН тунă çураçтару комиссийĕ текенскерне малашне те ĕçлеме хушасси çинчен каланă.

Асăннă комиссие 1948 çулта тунă. Унта США, Франци тата Турци представителĕсене кĕртнĕ. Ăна Израиль государствипе арабсен çĕршывĕсем хушшинчи тавлашусене йĕркелеме пулăшас тĕлĕшпе ĕçлеме тунă пек кăтартнă. Чăннипе çак комисси Çывăх-Хĕвелтухăçĕпе Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнче Америкăн агрессиллĕ политикине пурнăçлама тăрăшнă. Паллах ĕнтĕ, комисси нимĕнле усăллă ĕç те тума пултарайман. Çураçтару комиссийĕн ĕçĕсем çинчен çырнă доклада Политикăллă ыйтусен специальнăй комитетĕнче сӳтсе явнă чухне СССР делегацийĕ асăннă комисси США, Англи тата Франци интересĕсене хӳтĕлес тĕлĕшпе çеç ĕçленине, çав державăсем Çывăх Хĕвелтухăçĕпе Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнче хăйсем пуçпулса тăрас йĕркене сыхласа хăварма тăрăшнине, комисси Израиль государствипе арабсен çĕршывĕсем хушшинчи тавлашусене йĕркелеме нимĕн чухлĕ те пулăшманнине, пачах та урăхла, вăл ку ĕçре чăрмантарса пынине палăртнă. Совет делегацийĕ хăйĕн сĕнĕвне тăратнă, унта комиссие салатса яма тата интересленекен çĕршывсене хăйсем хушшинчи тавлашусене пĕр-пĕринпе калаçса татăлнипе йĕркелеме май туса пама сĕннĕ.

Генеральнăй Ассамблея çураçтару комиссине малашнехи вăхăта та хăварасси çинчен калакан резолюцие, унта Канада делегацийĕн тӳрлетĕвне кĕртсе, йышăннă. Ăна йышăнассишĕн ялан пекех Америкăпа Англи блокĕ майлă тăракансен ытларахăшĕ сасăланă.

Совет Союзĕн делегацийĕ çураçтару комиссине салатса ярасси çинчен панă сĕнĕве хирĕç Америкăпа Англи блокĕнчи çĕршывсен делегацийĕсем сасăланă, çапла майпа вĕсем ку сĕнĕве сирсе янă.

США делегацийĕ вăрттăн майпа тем тĕрлĕ киревсĕррĕн хăтланнине тата ытти хăшпĕр делегацисемпе калаçса татăлнипе пула Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕ США, Франци тата Турци представителĕсенчен тăракан çураçтару комиссине çаплипех хăварасси çинчен решени йышăннă. Ку решени Çывăх Хĕвелтухăçĕнчипе Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнчи халăхсен интересĕсене хирĕç пырать. Ку решени США-па Англие Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн çураçтару комиссийĕ текен органĕпе хăйсен агрессиллĕ политикине пурнăçлас ĕçре тата ку районти çĕршывсен шалти ĕçĕсене хутшăнас ĕçре усă курма май парать.

Генеральнăй Ассамблейин кăнтăрлахи пĕрлехи ларăвĕнче

ПАРИЖ, январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Паян ООН Генеральнăй Ассамблейин кăнтăрла пулнă ларăвĕнче экономикăпа финанс ыйтăвĕсен комитечĕ тĕнчери çĕршывсен экономики çинчен йышăннă резолюцие пăхса тухнă. Ку резолюцие экономикăпа социальнăй ĕçсен совечĕ тĕнчери çĕршывсен экономики çинчен тăратнă докладăн иккĕмĕш сыпăкĕ тăрăх çырса хатĕрленĕ. Ку ыйтупа пленума 4 резолюци тăратнă. Вĕсенчен пĕрине те халăх пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе мĕнле конкретнăй ĕçсем тумалли çинчен каламан. Капитализмлă нумай çĕршывсенче вара США хушнипе васкасах хĕçпăшал хатĕрлени пирки халăх пурнăçĕ хытă начарланнă. Пĕррешĕ резолюци проектĕнче çанталăкри инкеке пула пикек килсе тухнипе выçăпа антăракан халăхсене пулăшу парасси çинчен каланă. Ку проекта кĕртме совет делегацийĕ хăйĕн тӳрлетĕвĕсене тăратнă. Совет делегацийĕ тӳрлетĕвĕсенче васкасах хĕçпăшалланни ĕçсынни массисен пурнăçне ытла та хытă начарлатса пыни çинчен, васкасах хĕçпăшал хатĕрлессине чарса лартмалли, тĕнчери чĕртавар тата апат-çимĕç ресурсĕсемпе халăх пурнăçне лайăхлатма усă курмалли çинчен каланă.

Совет Союзĕн сĕнĕвне хӳтĕлесе, Украина представителĕ Сталник сăмах туххса каланă. Вăл капитализмлă çĕршывсенче чылайăшĕнче ресурссен пысăк пайне васкасах хĕçпăшал хатĕрлеме панине, çавна пула граждансене кирлĕ таварсем тăвас ĕç чакса пынине палăртнă. Совет делегацийĕ сĕннĕ тӳрлетӳсене йышăнни чылай çĕршывсенче халăха апат-çимĕçпе таварсем парса тăрас ĕçе лайăхлатма, апат-çимĕç нумайрах хатĕрлеме конкретлăй ĕçсем тăвасси патне илсе пырĕччĕ, тенĕ вăл.

Белорусси представителĕ Гуринович хăйĕн сăмахĕнче Атлантика блокĕнчи çĕршывсем çар валли пысăк запассем хатĕрлени халăх пурнăçне начарлатса пыни çинчен калакан тĕслĕхсене илсе кăтартнă. Апат-çимĕç складсенче пăнтăхса выртать, çав вăхăтрах миллионшар çынсем выçăпа антăраççĕ. США пăсăлса кайнă апат-çимĕçе сутма тăрăшать, ăна апат-çимĕç çитмен çĕршывсене сутать. Çапла, США-ран Англие пăсăлса кайнă çăмарта порошокĕ, Бразилие—çиме юрăхсăр çăратнă сĕт, Бельгие—пĕçерме юрăхсăр тулă 420 пин тонна ярса панă. Васкасах хĕçпăшал хатĕрлессине чарса лартни тĕнчери экономикăна лайăхлатма пулăшĕччĕ. Çавăнпа та Белорусси делегацийĕ Совет Союзĕн тӳрлетĕвĕсене хӳтĕлет, вĕсене йышăнас пулать, тенĕ вăл.

Польша та Чехословаки представителĕсем те Совет Союзĕн сĕнĕвĕсене йышăнма кирли çинчен каланă. Ытти çĕршывсен делегачĕсем капитализмлă çĕршывсем васкасах хĕçпăшал хатĕрлени тĕнчери экономикăна начарлатса пыни факта сирсе ямасса хăтланса та пăхман. Чили делегачĕ кăна, çав факта йышăнса, хĕçпăшалланас политика тытса пынине тĕрĕс ĕç туни пек кăтартма хăтланнă, вăл Америка кăларса тăратнă суя сăлтава—хăйсен çĕршывĕсене «хӳтĕлес» шутпа васкасах хĕçпăшалланма кирлĕ текен сăлтава тепĕр хут калаcа панă.

Çапах та США майлă тăракансем ытларахăшĕ ССР Союзĕ тӳрлетĕвĕсене йышăнассине хирĕç сасăланă. Вĕсене йышăнман. США майлă тăракансем ытларахăшĕ комитет сĕннĕ резолюцие ирĕпленĕ.

Пленум çавăн пекех экономикăн уйрăм ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисене малалла ĕçлеме хушакан резолюцие те çирĕплетнĕ. Кун хыççăн ĕç халăхĕн пурнăç шайĕ çинчен çырнă резолюци проектне сасăлама тăратнă. Ку резолюцие комитет йышăннă. Унта та, малтанах резолюцири пекех, ĕçсынни массисен пурнăçĕ начарланине палăртнă, анчах вĕсен пурнăçĕ мĕншĕн начарланса пынине кăтартман. Ку ыйтупа пленума Чехословаки делегацийĕ хăйĕн резолюци проектне тăратнă. Чехословаки делегачĕ чылай çĕршывсем васкасах хĕçпăшал хатĕрлессине чарса, ĕçсынни массисен пурнăç условийĕсене лайăхлатмашкăн конкретнăй мерăсем йышăнма сĕннĕ.

СССР представителĕ Г. Ф Саксин Чехословаки резолюци проектне хӳтĕленĕ. Вăл Атлантика блокĕнчи çĕршывсен, çав шутра ыттисенчен вăйлăрах аталаннисен те, экономика аталанăвĕн малашлăхĕсем тĕксĕм пулнине, вĕсем США-ри агрессиллĕ вăйсем хушнипе васкасах хĕçпăшалланнине, çавна пула вĕсен экономики 1952 çулта тата ытларах начарланассине палăртнă. Васкасах питĕ нумай хĕçпăшал хатĕрлени пĕр вăхăтрах апат-çимĕçпе таварсем хакланаççĕ, укça хакĕ пĕчĕклет, налогсем пысăкланаççĕ, çавăнпа пĕрлех реальнăй ĕç укçи чакать, хресченсен тупăшĕсем чакса пыраççĕ, тенĕ вăл.

ООН Генеральнăй Ассамблейин промышленноçă çĕршывсене пурăнакан тата вăйçăр çĕршывсене пурăнакан ĕçсынисен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе мĕнле конкретнăй ĕçсем тумалли пирки калаçмалла, тенĕ СССР представителĕ. Ку енĕпе мĕнле ĕçсем тумалли çинчен Чехословаки делегацийĕ Генеральнăй Ассамблейăра пăхса тухма тăратнă резолюци проектĕнче каланă. Совет Союзĕн делегачĕ Чехословакин çав проектне пĕтĕмпех ырлать, ку резолюцие йышăнни Генеральнăй Ассамблея ĕçсынисен экономика тĕлĕшĕнчи пурнăçне лайăхлатма пулăшĕ, тесе шутлать.

Чехословаки резолюци проектне Польша делегачĕ Кац-Сухи ырланă. Вăл ĕçсынни массисен пурнăçне лайăхлатма кирли çинчен Пĕрлешнĕ нацисен организацине Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ янă çырăва аса илтернĕ.

Египет делегачĕ те хăй Чехословаки сĕнĕвĕсене ырлани çинчен пĕлтернĕ. Вăл асăннă резолюцие выçăпа антăракан халăхсене пулăшма палăртни çинчен каланă.

США тата Атлантика блокĕнчи ытти çĕршывсем Совет Союзне тата халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç агрессиллĕ вăрçа хатĕрлес шутпа васкасах хĕçпăшалланаççĕ, çавăнпа та ку çĕршывсен делегацийĕсем, резолюцире васкасах хĕçпăшалланас ĕç пирки нимĕн те калаттармасăр мар тесе хытă тăрăшнă. Вĕсем хăсниле пурне комитет сĕннĕ резолюци проектне йышăннă. Чехословаки резолюци проекчĕшĕн 8 делегаци (СССР. Украина, Белорусси, Польша. Чехословаки, Сири тата Йемен) сасăланă. 13 делегаци нихăш майлă та сасăламан, 32 делегаци хирĕç сасăланă.

Англипе Америка колонизаторĕсем поражени тӳснĕ

ПАРИЖ, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Социальнăй, гуманитарнăй тата культура ыйтăвĕсен комитечĕ (виççĕмĕш комитет) нумайччен сӳтсе явнă хыççăн январĕн 25-мĕшĕнче этем прависем çинчен тумалли килĕшĕвĕн проектне нацисен самоопределени прави пирки (нацисен тытăм ĕçĕсене хăйсем тĕллĕн йĕркелеме право пурри çинчен) статья кĕртме йышăннă.

СССР делегацийĕ мĕнпур халăхсемпе нацисене самоопределени правин пама тата ăна пурнăçласа пыма кирли çинчен ООН-ра темиçе хутчен те каланă. Сăмахран, ООН Генеральнăй Ассамблейин 5-мĕш сессийĕнче СССР делегацийĕ хăйĕн сĕнĕвне тăратнă. Унта çапла каланă: «Кашни халăхăн тата кашни нацин самоопределени прави пур. Тытăм ĕçĕсене хăйсем тĕллĕн туса пыман территорисенчи управлени ĕçĕшĕн ответлă пулса тăракан государствăсен ку правăна пурнăçлама пулăшмалла, çак ĕçе ООН опекăри территорисем тĕлĕшпе йышăннă принципсемпе тĕллевсене пурнăçласа туса пымалла». Анчах Генеральнăй Ассамблейăн иртнĕ сессийĕ ку сĕнĕве йышăнман.

ООН Генеральнăй Ассамблейин хальхи сессийĕнче СССР делегацийĕ каллех мĕнпур халăхсемпе нацисен самоопределени прависене хӳтĕленĕ. Виççĕмĕш комитетра пăхса тухма 13 çĕршыв (Афганистан, Бирма, Египет. Инди, Индонези, Ирак, Иран. Ливан. Пакистан, Сауловски Аравĕ, Сири, Филиппин тата Йемен) резолюци проекчĕ тăратнă. Унта тĕнчери çĕршывсен этем прависем çинчен тумалли килĕшĕвĕн проектне нацисен самоопределени прави пирки статья кĕртме сĕннĕ. Çавăн чухне Совет Союзĕн делегацийĕ, Украина, Белорусси тата халăх демократи çĕршывĕсен делегацийĕсем малтанхи кунран пуçласах мĕнпур халăхсемпе нацисен, хăйсем тĕллĕн пурăнмалли тата самоопределени правине хӳтĕлес тĕлĕшпе принципиальнăй позици йышăннă.

Англи, Америка, Франци, Бельги тата ытти çĕршывсен колонизаторĕсем нацисене хăйсем тĕллĕн пурăнмалли право парассине хирĕç тăраççĕ, вĕсем—нацисен никама пăхăнманлăхĕн тăшманĕсем. Вĕсен представителĕсем Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн виççĕмĕш комитетĕнче 13 çĕршыв тăратнă резолюци проектне хирĕç каланă, тĕрлĕ «тӳрлетӳсемпе» асăрхаттарусем» нумай кăларса тăратнипе асăннă резолюци проектне путмантарса лартма хăтланнă.

СССР, Украина, Белорусси, Польша тата Чехословаки представителĕсем сăмах туххса каланă. Вĕсем Англипе Америка империалисчĕсен агрессиллĕ политикине тăрă шыв çине кăларнă. Америка агрессорĕсем. «нацисене аталанма пулăшатпăр» тесе суйса, çав çĕршывсенче Америка çар базисене, çар хатĕрсен заводĕсене тата ытти çавăн пек ĕçсене тунине, колонисемпе пăхăнса тăракан çĕршывсене хытă пусмăрланине, çавсем вара мир ĕçĕшĕн пысăк хăрушлăх кăларса тăратнине ĕненмелле кăтартса панă.

Виççĕмĕш комитет этем прависем çинчен тумалли килĕшĕвĕн проектне нацисен самоопределени прави çинчен калакан положени тата статья кĕртме йышăннă. Çавсене проекта кĕртессишĕн 33 делегаци сасăланă 9 делегаци çавăн пек тăвассине хирĕç сасăланă. 10 делегаци нихăш майлă та сасăламан. Ку ыйтупа йышăннă резолюци проектĕнче, сăмахран, çакна палăртнă: ООН Генеральнăй Ассамблейи халăхсемпе нацисен самоопределени правине этемĕн тĕп прави вырăнне шутлама, ку правăна пăсни халиччен юн тăкăнакан вăрçăсем пуласси патне илсе пынине. çав правăна пăсни миршĕн яланах хăрушлăх туса хунине йышăнчĕ, тенĕ.

Малалла çак документра акă мĕнле каланă: Генеральнăй Ассамблея тĕнчери çĕршывсен этем прависем çинчен тумалли килĕшĕвне е этем прависем çинчен тумалли килĕшӳсене мĕнпур халăхсемпе нацисен самоопределени прави çинчен статья кĕртме йышăнать, çапла майпа Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн Уставĕнче—«Пур халăхсен те самоопределени прави пур» тесе калаcа çырса хунă принципа тытса пынине кăтартса парать, тенĕ.

Совет Союзĕн тата халăх демократи çĕршывĕсен представителĕсемпе пĕрле ку документа йышăнассишĕн Аргентина, Афганистан, Бирма, Боливи. Бразили. Венецуэла, Гаити, Гватемала. Греци, Доминикан республики Египет, Инди, Индонези. Ирак, Иран. Либери. Ливан. Мексика, Никарагуа, Пакистан, Сауловски Арави. Сири. Таиланд, Уругвай, Филиппин. Эфиопи. Йемен тата ытти çĕршывсен представителĕсем сасăланă.

Этем прависем пирки калакан килĕшĕве нацисен самоопределени прави çинчен статья кĕртессине хирĕç США представителĕпе пĕрле тепĕр 8 делегаци. çав шутра Англи. Франци. Бельги Голланди тата ытти çĕршывсен делегацийĕсем сасăланă.

Нихăш майлă та сасăламаннисен хушшинче Дани Израиль, Колумби, Куба, Норвеги. Чили. Швеци, Эквадор тата ытти çĕршывсен делегацийĕсем пулнă.

Совет делегацийĕ резолюци проектне мĕнпур халăхсемпе нацисен те самоопределени прави пуррине уйрăмах палăртакан тӳрлетӳ кĕртме сĕннĕ. Çак тӳрлетĕве проекта кĕртес пирки сасăланă чухне колониллĕ державăсем (США, Англи тата Франци) хăйсем тĕллĕн кăна тăрса юлнине уйрăмах палăртни кирлĕ. Совет делегацийĕн тӳрлетĕвне йышăнассишĕн 29 делегаци сасăланă 13 делегаци нихăш майлă та сасăламан. Çак тӳрлетĕве йышăнассине хирĕç сӳлте асăннă виçĕ государствăн (США, Англи тата Франци) делегацийĕсем кăна сасăланă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ.

Фронтсенче нимĕнле паллă улшăну та пулман. Фронтри уйрăм участоксенче хăшпĕр çĕрте çапăçусем пулнă тата пĕрпĕрне хирĕç тупăсемпе пенĕ.

Ĕнер Халăх çарĕн чаçĕсем хĕвеланăçĕнчи çыран çывăхĕнче тăшманăн пĕр эсминецне тата темиçе карапне сиенленĕ, уйчен çав карапсем çыран тăрăхĕнчи района тупăсемпе пеме хăтланнă.

Паян самолетсене хирĕç çапăçакан салтаксем тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ, çав самолетсем уйчен, ытти самолетсемпе пĕрле, хĕвелтухăçĕнчи çыран районне тапăннă пулнă.

Греци сучĕ вĕлермелле тунă Греци патриочĕсен тăванĕсем И. В. Сталин юлташ патне янă çыру

ПАРИЖ, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Грецире суд вĕлермелле тунă патриотсен тăванĕсем И. В. Сталин юлташ патне янă çырăва ССР Союзĕн ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕнчи делегаци пуçлăхĕн заместителĕ Я. А. Малик Генеральнăй Ассамблейăн улттăмĕш сессийĕн председательне Нервона ярса панă. Çырура акă мĕн каланă:

«Унăн превосходительствине, СССР Министрĕсен Совечĕн Председательне Иосиф Сталин Генералиссимуса.

Сирĕнтен пулăшу пама чунтан-чĕререн ыйтатпăр: халиччен вĕлермелле суд тунă 12 патриотран 6 патриота тепĕр хут суд тума хатĕрленнине Греци правительстви Эсир тăрăшнипе пăрахăçлатăрччĕ. Çав 12 патриота вĕлерес пирки йышăннă приговора Эсир ку ĕçе хутшăннă пирки кăна пурнăçламанччĕ. 375-мĕш закон тăрăх айăпласа çĕнĕрен суд тума хатĕрленни вăл суд умне тăратнă çынсене вĕлерме тепĕр хут хăтланни пулать. Çĕнĕрен суд тусан вĕсене вĕлерме приговор йышăнĕç, çав приговора пурнăçласа халăхăн 6 паттăр борецне вĕлерни вăл Грецире каллех юн юхтарас тапхăр пуçланни пулса тăрĕ, Грецин асап курса пĕтнĕ, мирлĕ пурнăç тума ыйтакан халăхне вăйлă çапса хуçни пулĕ. Эпир сирĕнтен чунтан-чĕререн çапла ыйтатпăр: пирĕн ачасене вилĕмрен хăтарăр. Хăвăр Греци халăхне кăмăлланине тепĕр хут пирĕн халăха кăтартса парăр. Эпир хĕн-хур курнине Эсир этемлĕхе юрăтас туйăмпа шута илессине, пире пулăшассине малтанах шанса тăрса, Сире малтанах тав тăватпăр.

Василики Белоянни, Прина Граммену, Про Папа, А. Калофолпа, А. Канеллопулу».

Ку çырупа пĕрле Малик хăйĕн çырăвне ярса панă. Малик хăйĕн çырăвĕнче çапла каланă: асăннă çыруран «Греци делегачĕ Генеральнăй Ассамблейăн улттăмĕш сессийĕн Политикăллă ыйтусен специальнăй комитетĕнче 1951 çулхи ноябрĕн 20-мĕшпе 23-мĕшĕнче официальнăй сăмах парса лăплантарса каланисем, ку çырура асăннă Греци патриочĕсемшĕн вĕсене асаплантарса вĕлерес хăрушлăх çук, вĕсене пурне те Греци правительстви сулпа айăпланисене каçарас тĕлĕшпе йышăннă мерăсем тăрăх çăмăллăх парассĕ тени вăл Пĕрлешнĕ нацисен организацине тата тĕнчери общественноçа улталас шутпа каланă сăмахсем пулни курăнса тăрать. Асăннă çыру Грецин çав патриочĕсене çĕнĕрен, суд туса вĕлерме хатĕрленни тата вĕсемшĕн вилĕм хăрушлăхĕ, вĕсене вĕлермелле туса çĕнĕ приговор йышăнас хăрушлăх тухса тăни çинчен калать.

Сӳлерехре çырнисене шута илсе, Генеральнăй Ассамблейăн 3-мĕшпе 4-мĕш сессийĕсенче Грецири политикăллă террора пула асап куракансене, вĕлермелле тунисене хӳтĕлес ĕç çине этемле пăхма йышăннине асра тытса, господин председатель, сирĕнтен Греци патриочĕсен пурнăçĕсене çăлса хăварма Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕ урлă халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнма ыйтатăп.

Господин председатель, сирĕнтен çак çырăва Генеральнăй Ассамблея документĕ вырăнне шутласа пичетлесе кăларма тата Генеральнăй Ассамблейăн улттăмĕш сессийĕн пур делегачĕсене те валеççе пама ыйтатăп».

Греци патриочĕсен тăванĕсем хăйсен çырăвне П. В. Сталин юлташ патне янипе пĕрлех, çавăн пек çырусем США президенчĕ Трумэн патне. Франци президенчĕ Венсан Ориоль патне тата Британи премьер-министрĕ Черчилль патне ярса панă.

Англи çарĕсем Исмаили хулинче çĕнĕрен агрессиллĕ ĕçсем тунă

КАИР, январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Паянхи хаçатсем Англи çарĕсем Исмаили хулинче çĕнĕрен агрессиллĕ ĕçсем туни çинчен пĕлтереççĕ.

Тĕттĕм пулсан, танксем, броневиксем тата артиллери пулăшнипе, Англи çарĕсем ĕнер губернатор резиденцине тата Египетăн полицие пулăшма тунă отрячĕсен казармиссене хупăрласа илнĕ. Англин Исмаилири çарĕсен командующийĕ Эксхэм бригаднăй генерал Египетăн полицие пулăшма тунă отрячĕсене парăнма тата хĕçпăшалсене пăрахма хушса хут çырса янă. Полицие пулăшма тунă отрядсем хăйсен хĕçпăшалĕсене пăрахмасан, Англи çарĕсем губернатор резиденцийĕпе казармĕсем çине тупăсемпе пеме тытăнасси çинчен пĕлтернĕ.

Египетăн шалти ĕçĕсен министерствин пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: полицие пулăшма тунă отрядсен начальникĕ, шалти ĕçсен министрĕ хушнине пурнăçласа, Англи çарĕсен командующийĕ хушнине тума килĕшмен. хăйĕн отрячĕсене Англи çарĕсене хирĕç тăма приказ панă. Кун хыççăн Англи çарĕсем тупăсемпе пеме тытăннă. Артиллери, танксем тата броневиксем асăннă суртсем çине тупăсемпе пенĕ. Англин вăйлă хĕçпăшалланнă çар чаçĕсемпе Египетăн начар хĕçпăшалланнă. полицие пулăшма тунă отрячĕсем темиçе сехет хушши çапăçнă. Египетăн полицие пулăшма тунă отрячĕсем акăлчансене хирĕç хытă тăнă. Англи çар чаçĕсенче салтаксем темĕн чухлĕ нумайрах пулнă. Çавна пула вĕсем Египет отрячĕсене парăнтарнă.

Шалти ĕçсен министерстви пĕлтернĕ тăрăх, полицие пулăшма тунă отрядсенчен 46 çын вилнĕ, 72 çын аманнă. Акăлчансем хушшинчен 3 çын вилнĕ, 13 çын аманнă.

«Аль-Ахрам» хаçат ĕнер Египет министрĕсен кабинечĕ хăйĕн чрезвычайнăй ларăвĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ решенисем йышăнни, çав шутра Англипе дипломатиллĕ çыхăнусем тытма пăрахасси тата Англи подданнăйĕсене Египетран кăларса ярасси çинчен решени йышăнни, тесе пĕлтерет.

КАИР. январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Январĕн 26-мĕшĕнче иртенпех Каирта пурте тарăхса пăлханни палăрать. Египет çыннисем Англин Исмаилири çарĕсем агрессиллĕ ĕçсем туни пирки хытă тарăхнă. Англипе Америка империализмĕ киревсĕр ĕçсем тунине хирĕç протестлесе хулара демонстрацисем иртнĕ. Демонстрацисене халăхăн мĕнпур сийĕсен представителĕсем хутшăннă.

Хула транспорчĕ ĕçлеме чарăннă.

Каирта чрезвычайнăй йĕрке туса хуни çинчен пĕлтернĕ.

ПАРИЖ, январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентствин корреспонденчĕ Каиртан пĕлтернĕ тăрăх. Египет çыннисем «Виндзор» тата «Шеперд» текен гостиницăсене. Британи институчĕн суртне тата Англин «Бритиш оверсис эйруэйс корпорейшн» ятлă авиаци компанийĕн кантурне вут тивертсе çунтарса янă.

Египетри çĕнĕ правительство

КАИР. январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Паян хаçатсем король декретне пичетлесе кăларнă. унта Нахас-паша правительстви вырăнтан тухни, премьер-министр пулма Али Махер-пашана уйăрса лартни çинчен каланă.

Али Махер-паша çĕнĕ правительство туса хунă. унта вăл премьер-министр, ют çĕршыв ĕçсен министрĕ. çар министрĕ тата тинĕс-çар министрĕ вырăнĕсене йышăннă.

Али Махер-паша заявленийĕ

ЛОНДОН. январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Египетăн çĕнĕ премьер-министрĕ Али Махер-паша. хăйĕн вырăнне йышăнса. Фарук король патне янă çырура вăл Египет халăхĕн шухăш-ĕмĕчĕсене пурнăçлама тăрăшасси. Англи хĕçпăшаллă вăйĕсене Суэц каналĕ патĕнчен илсе кайтарассишĕн тата Нил тăрăхĕнчи çĕршывсене пĕрлештерессишĕн тăрăшасси çинчен пĕлтернĕ.

Египетри ĕçсем

КАИР. январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Каирта халĕ те лару-тăру лăпланса çитмен. Тĕп урамсене, кĕперсене, правительство учрежденийĕсене тата обществăллă вырăнсене полицийпе салтаксен пысăклатнă отрячĕсем хуралласçĕ, хулара пур çĕрте те салтаксем тиенĕ грузовиксем тăраççĕ. вĕсем çапăçăва кĕме хатĕр. Хулара каçхине комендантă пăхăнса тăмалли йĕркене çирĕп пурнăçласа пыраççĕ. Кам каçхине 6 сехетрен кайран тата ирхине 6 сехет çитиччен хула урамне тухать. ăна ним асăрхаттармасăрах вĕлерме пултараççĕ.

«Аль-Балаг» хаçат Каирта юлашки вăхăтра пулса иртекен ĕç çинчен умстатья пичетленĕ. Унта вăл акăлчансем Суэц каналĕ патĕнче тискер ĕçсем тунине текех чăтса пурăнма май çук, халăхăн чăтăмлăхĕ вĕçне çитрĕ, тесе çырать.

Сунарçăсен пархатарлă ĕçĕ

Республикăри сунарçăсем пĕлтĕр пурĕ 161 кашкăр тытнă. Ку тĕлĕшпе Вăрнар районĕнчи Пăртас ялĕнчи сунарçă Анисимов юлташ уйрăмах пысăк çитĕнӳ тунă, вăл пĕччен 9 кашкăр тытнă.

Кашкăрсене пĕтерес ĕç çĕнĕ çулта татах та лайăхланнă. Акă. Канаш районĕнчи Ямаккассинчи сунарçă Г. Григорьев кĕске вăхăтрах 12 кашкăр тытса «Заготживсырье» кантурне панă. Хастарлă сунарçăна кашни кашкăршăн 225-шер тенкĕ преми памалла тунă. Муркаш районĕнчи Çурлатăрри ялĕнчи В. Орлов, Советски районĕнчи паллă сунарçă А. Живаев юлташсем кăçал тăхăршар кашкăр тытса панă.

Сунарçă-промысловиксем тăрăшнипе пула, республикăри «Заготживсырье» кантурĕ тилĕ, мулкач, сăсар, шашкă, пакша тата çавăн йышши чĕрчунсен тирĕсене хатĕрлесе памалли иртнĕ çулхи плана 120 процент тултарнă.

Государствăна мамăк тирлĕ чĕрчунсен тирĕсем хатĕрлесе парас тĕлĕшпе Вăрнар районĕнчи Пăртас ялĕнчи сунарçă-промысловик Федоров юлташ Пĕтĕм Союзĕпе паллă вырăн йышăннă. Вăл иртнĕ сезонта хатĕрлесе памалли задание 400 процент тултарнă, 1951—1952 мĕш çулсенчи задание ултă хут иртттерсе тултарма сăмах панă.

Федоров юлташăн паха опытне Пĕтĕм Союзри сунарçăсем хушшинче сарма йышăннă.

Пирĕн республикăри пилĕк сунарçăна «Отличник охотничего промысла» значок парса наградăланă.

Вăрнар районĕнче

КУРСРАН ВĔРЕНСЕ ТУХРĔÇ

Вăрнарти ялхуçалăх шкулĕ çумĕнче колхоз председателĕсен курсĕ ĕçлерĕ. Унта 6 районти колхоз председателĕсем, пурĕ 22 çын, вĕренчĕç. Колхоз председателĕсем пĕр уйăх хушшинче агрономи науки, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, колхоз производстви, фермăсене механизацилес ыйтусем тăрăх лекцисем итлерĕç. Лекцисене ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем. ялхуçалăх пайĕн работникĕсем тата ялхуçалăх шкулĕн преподавателĕсем вуларĕç.

Курсра вĕренекенсем Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхозра экскурсире пулса вĕсен ĕç опычĕсемпе паллашрĕç.

ПЫСĂК ВЫЛЯВСЕМ

Перекет касси государство заемĕсем тăрăх выляв укçи нумай тӳлет 1951 çулта пĕтĕмпе государство заемĕсем тăрăх 540.955 тенкĕ выляв укçи тӳленĕ. Вăл шутран пĕр çын 10.000 тенкĕ, 7 çын 5 000-шер тенкĕ, 44 çын 1.000-шер тенкĕ выляса илнĕ.

1952 çулта январĕн 9-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче кăна государствăн 2 процентлă заемĕ тăрăх 43 435 тенкĕ выляв укçи тӳленĕ. Вăл шутран Вăрнар поселокĕнче пурăнакан Ш. юлташ 10.000 тенкĕ, Молотов ячĕпе тăракан колхозри К. колхозница 5.000 тенкĕ выляса илнĕ.

Хоккей вăййипе республикăра мала тухассишĕн

Çак кунсенче Улатăрпа Çĕмĕрле хулисенче хоккей вăййипе республикăра мала тухассишĕн малтанхи вăйăсем пулса иртнĕ. Шупашкарти «Спартак» спорт обществи хоккейсчĕсем Çĕмĕрлере «Красная звезда» спорт обществи командине 7:2 шутпа, «Урожай» спорт обществи командине 7:1 шутпа çĕнтернĕ.

Шупашкарти «Молния» спорт обществин хоккей команди, Улатăрта пулса, «Локомотив» спорт обществи командипе тĕл пулса выляна. Вăйăра шупашкарсем 8:2 шутпа çĕнтернĕ.

Пĕлтерни

Январĕн 30 мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинечĕнче докладчиксемпе агитколлектив руководителĕсем валли: «Чăваш АССР-ĕн хуçалăхпа культура строительствинчи çитĕнӳсем тата пирĕн малашнехи задачăсем çинчен» тема тăрăх доклад пулать. Докладчик—Чăваш АССР Статистика Управленийĕн начальникĕ Ф. Я. Якимов юлташ.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Ответлă редактор М. К. КОСТИН.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян. январĕн 30 мĕшĕнче, чăвашла спектакль
«ЧЕЧЕКЛĔ УЛМУÇÇИ»

Ыран. январĕн 31-мĕшĕнче, чăвашла спектакль
«НАРСПИ»

Февралĕн 1-мĕшĕнче вырăсла спектакль
«ЖЕНИТЬБА»

Часах чăвашла спектакль
«ЮЛИУС ФУЧИК»

Спектакльсем каçхине 8 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67 ответлă редактор заместителĕ—3-99. ответлă секретарь—4 26. секретариат—3-54. промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17. ялхуçалăх пайĕ—3-97. пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61. совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01224 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.